Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ÇЕНТАБЕР 17 ШАМАТКУН 215 (5028) №

ЧĂВАШ КОММУНĔ

21-мĕш çул тухать | ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн хаçачĕ | Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом Печати.
ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 6—87, ред. заместителĕн—3—97, редакци секретарĕн—4—40, парти пурнăç пайĕн—0—85, йалхуçалăх пайĕн—4 — 97, советсен пайĕн—0—88, промышленнăç пайĕн—7—97, йалкорсен пайĕн—2—30, дежурнăйĕн — 6—23.

Сывлăх учреждени строительстви хăвăртлăхĕсене вăйлатмала

Ленин—Сталин партийĕ, совет правительстви халăх сывлăхне сыхлас ĕç çине уйрăмăнах хыттăн пăхаççĕ. Рабочисемпе хресченсен социализмлă государстви халăх сывлăх ĕçне кăларакан расхут çулран çул ÿссе пырать. Пирĕн республика тăрăх кăна 1937 çулта сывлăха сыхлас ĕçе 20 мĕлйун тенкĕ ытла кайнă. 1938 çулта ку ĕçе 24 мĕлйун тенке йахăн кайать.

Республикăра сывлăх учрежденисем—пуђницасем, ача йаслисем, ача çуратмали çуртсем т. ыт. те тăвасси çулран-çул ÿссе пырать.

Октябĕрти революцичченхи вăхăтра чăваш халăхне тĕрлĕрен чирсем питĕ пысăк инкек кÿнĕ. Трахомă, туберкуђоз, кăрçанкă — чисарăлнă чирсем пулнă. Пĕр-пĕр епидеми килсе тухсан, вăл, уйрăмах—йалсенче, чĕретпех „шăлса“ тухнă. Вара ун пек чухне йала „мур“ килнĕ тесе, халăх нимĕн тума пултарайман.

Вăл вăхăтра хађхи пек сывлăха сыхлав учрежденисем пулман. Ача çуратмали çуртсем, трахпунктсем, феђдшĕр пункчĕсем çинчен ун чухне тĕлленмен те. Чăнах та сайра-хутра земски пуђницасем тĕл пулкалана, анчах вĕсем те йалсенчен инçетре пулнă. Унта чăваш халăхĕ çитеймен.

Халĕ пĕтĕмпех урăхла. Пирĕн республикăра кăна 49 пуђница, 3 поликлиникă, 700 йахăн трахпунктсем, ача çуратмали çуртсем 7, темĕн чухлĕ ача йаслисем, сачĕсем, плошчадкисем, санаторисем тата ытти те.

Партипе правительствă ачасене пĕчĕкренех сывă та паттăр çитĕнтерес йенĕпе калама çук пысăк ĕçсем тăваççĕ. Совет ачисем йаслесенче, плошчадкăсенче тĕреклĕ те сывлăхлă çитĕнеççĕ. Пирĕн республикăра ачасен санаторисем кăна 3. Кăçал Каршлăхри (Тутаркас р.) ачасен санаторинче 5 уйăх хушшинче 450 ача сывалнă. Колхозсенче 506 çезонлă йаслĕсем ĕçлерĕç. Вĕсенче 15.188 ача пулнă. Кунсăр пуçне тата йалан ĕçлекен йаслĕсем 33 уçнă.

Йаслĕсен хисепĕ пирĕн тата та ытларах пулма пултарнă. Колхозсенче йаслĕсем уçассине хăшпĕр районсенчи çĕрĕç пайĕсемпе уйрăм колхоз правленисем тивĕçлипе хакламаççĕ. Йаслĕсем уçма кирлĕ фондсене уйăрса хăвармаççĕ, йе уйăрнипе те ку ĕçре усă курмаççĕ. Кăна кăçал 683 колхозра йаслĕсем уçманни те аванах кăтартса парать.

1938 çулти строительствă планĕ тăрăх, пирĕн республикăра кăçал йалан ĕçлекен йаслĕсем 7, ача çуратмали çуртсем 4, акушеркă шкулĕсем 2, пуђницасем—1 (Чурачкă), Шупашкарта мађари станци, сĕт кухнисем—2 т. ыт. те тумала. Анчах çак чылай обйектсем тăрăх строительствă ĕçĕ чĕтма çук начар пырать. ССРС Тĕпĕçтăвкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1936 çулти ийунĕн 27-мĕшĕнче йышăннă саккуна пурнăçласа, Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕн кăçал Шупашкарта ача çуратмали çурт (40 вырăнлăх) туса лартмала. Тĕрĕссипе илсен, пайанхи куна ку çурта тума та тытăнман темеле, никĕсне те хывса пĕтермен. Строительствăра пурĕ те 3—5 çын кăна ĕçлет.

Чылай çĕрте йаслĕсемпе ача çуратмали çуртсене туса пĕтернĕпе пĕрех. Анчах вĕсене хута йама çурт ăшчиккисене, тулашĕсене туса пĕтерменни чарса тăрать. Çавăн пирки Çĕмĕрлере, Улатăрта ача йаслисем çурчĕсем хута каймасăр лараççĕ.

Сывлăх учреждени строительстви çакăн пек вăраха кайса пынăшăн, чăн малтан, Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕпе унăн руководителĕ Чернов йулташ айăплă. Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ строительствă ĕçне çаплах тивĕçлипе йертсе пымасть-ха. Анчах ĕçсем çакăн пек пулнăшăн Чăвашстройтрестпа унăн руководителĕ Йатмасăв йулташ çине те пысăк ответлăх ÿкет. Йĕркелĕ ĕç-и вăл, Стройтрест хăйĕн çавăрăнăçусăрлăхĕпе Шупашкарти трахинститутпа акушеркă шкулне туса пĕтерес ĕçре Сывлăха сыхлав халăх комиссариатне догăвăра пăрахăçласси патне çитерсе тăратни?

Трахом институт çуртне тĕпрен илсен туса çитернĕ. Унта пурĕ те Стройтрест йĕнчен електричĕствă кÿртесси, вентиђацисем тăвасси, тул йенчен сăрлăсси, прачечнăй тăвасси çеç йулнă. Анчах вăл çак ĕçсене туман, вăл тăвасса кĕтнĕ пулсан, института хута йарасси тата нумай вăхăта тăсăлма пултарнă. Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕн ирĕксĕрех електричĕствă кÿртес т. ыт. ĕçсене хăйĕн çине илмеле пулнă.

Чылай çĕрте строительствă пахалăхĕ начар (Çĕмĕрле, Çĕрпÿ), строительствă ĕçĕсем хакла ÿкеççĕ. Çавăн пек, Çĕрпÿри ача йаслине тунă çĕрте 7.000 тенкĕ ытлашши тухнă.

Сывлăх учреждени строительстви нумай вăхăта тăсăлса пынине, пахалăх йĕнчен начар пулнине, сметăран иртсе кайнине техникăлă, хуçалăхлă йĕркесĕрлĕхсемпе кăна çеç ăнлантарса пама çук. Тăшмансем сывлăх учрежденисен строительствинче те сăтăр тунă. Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕн строительствă пайĕ Çĕрпÿри, Çĕмĕрлери ача йаслисене тăшмансем сăтăрла тунине вăхăтра курман. Çакă вăл сывлăха сыхлав оргăнĕсенче ĕçлекенсене чыс тумасть.

Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ строительствă ĕçне кулленкун оперативлă йертсе пымала. Кăçал тума палăртнă сывлăх учрежденисене пурне те кăçалах туса пĕтермеле тăвас пулать. Иртнĕ çулсенчи пек строительствăна çултан çула чăсса пыни пулмала мар. Ку ĕçре Сывлăха сыхлав халăх комиссариатне район ĕçтăвкомсен хытă пулăшмала. Районсенчи сывлăх пайĕсен те Сывлăха сыхлав халăх комиссариачĕ пулăшасса, вăл килсе пурне те туса парасса çеç кĕтсе лармала мар.

Строительствă организацисен догăвăр тăрăх хăйсем çине илнĕ обйазательствăсене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçласа пымала.

Халăх сывлăх сыхлавне çителĕклĕ тата лайăх çуртсем парар!

ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕ

Çентабĕрĕн 16-мĕшĕнче ПСК(б)П Чăваш Обкомĕн VII-мĕш пленумĕ уçăлчĕ.

Малтанхи ыйтупа пленум ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференци решенине сÿтсе-йаврĕ. Пленум ПСК(б)П Обком бÿровĕпе унăн пĕрремĕш секретарĕн, Г. И. Ивановăн, ĕçĕсене—халăх тăшманĕсемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе тататăклăн кĕрешме парторганизацине мобилизацилеменшĕн большевикла çивĕччĕн критиклерĕ.

Пленум ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ Иванова ПСК(б)П хула комитечĕн пĕрремĕш секретарĕнчен тата хула комитет членĕсен составĕнчен кăлармала тунине ырласа, ăна ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕнчен тата Обком пленумĕн составĕнчен кăлармала, унăн партилĕхĕ çинчен пăхса тухма ыйтува ПСК(б)П Тĕпкомĕ çумĕнчи Парти Контрођ Комиççине памала турĕ.

Пленум ПСК(б)П Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕн ĕçĕсене туса пыма Алексей Алексейĕвич Волкăв йулташа суйларĕ.

Çĕнĕ машинă „РУ-I К“

Одессăри йалхуçалăх машинĕсем тăвакан савăтри конструктăр Корођков йулташ йалхуçалăх ĕçĕнче тĕрлĕрен ĕçсем тума пултаракан „РУ-I К“ машинă конструкциленĕ. Вăл машинăпа ирригаци канавĕсем, шыва чарма çÿллĕ вырăнсем купаласа тума пулать, вăл çĕре таран сухалама та пултарать.

Çĕнĕ машинă йалхуçалăхĕнче халиччен алăпа тăвакан хăшпĕр йăвăр ĕçсене те тума пултарать, сăмахран, çамрăк улмуççисене, çырла йăвăççисене алтса кăларасси тата ытти те.

Савăтри експеримент цехĕ халĕ çакăн пек пĕр машинă туса кăларнă. Ăна сăнаса пăхма Вăтам Азине йанă.

„Музыкантсем“

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНĂÇ ЧИККИ, çентабĕрĕн 15-мĕш. Чылай çĕрле пулсан, чикĕне хурал тăмали нарйадра пулнă Н. отрйадри пограничниксем (отрйад начаљникĕ майор Грушко йулташ) Скђар тата Соклак йулташсем чикĕ леш йенчен купăс сасси илтнĕ. Бойецсем тимлĕн итлеме пуçланă. Вĕсен çивчĕ куçĕсем шăп чикĕ патĕнчех такам пĕчĕк електричĕствă хунарĕпе çигналсем панине курнă.

Вара пĕчĕк хунар çути сÿнсе ларнă, купăс калама та чарăннă. Тата темиçе минутран таçта çĕнĕрен купăс сасси илтĕнсе кайнă. Пограничниксем çакă вăл маневр пулнине çийĕнчех туйса илнĕ: тăшман вĕсен сыхăлăхне урăх çĕре пăрса йарса пирĕн çĕр çине шпионсене каçарса йарасшăн.

Вăхăта çухатмасăр, Скђар тата Соклак йулташсем çутăпа тăвакан çигналсем курăннă тата купăс сасси илтĕннĕ вырăна чупса кайнă. Вĕсем виçĕ паллă мар çын пирĕн чикĕ урлă каçнине асăрхаса илнĕ. „Музыкантсене“ тытнă. Вĕсене илсе пынă заставăра ухтарсан, вĕсенне пăшал, документсем, компăс тата купăс тупнă. Вĕсем—йут çĕршыв разведкин шпионĕсем пулнă.

Отрйад командованийĕ Скђарпа Соклак йулташсене тавтунă.

(ТАСС).

Хĕрлĕ Çар призывĕ

Призывниксене ăсатни

КАНАШ. (Хамăр корр.). Çентабĕрĕн 12-мĕшĕнче призывниксене Хĕрлĕ Çар ретне ăсатнă йатпа вакунсем йусакан савăтри рабочисен вечĕрĕ пулса иртрĕ. Вечĕрта завком председателĕ Гађцĕв, çар комиссарĕ Михайлăв, призывниксем: Аникейĕв, Карпăв йулташсем тухса каларĕç.

Вакунсем йусакан савăт Хĕрлĕ Çар ретне пултарулă çамрăксем парать. В. Е. Карпăв техникăна çĕнсе илсе, производствă командирĕ пулма тăрăшнă. Савăтра инспектăр пулса ĕçленĕ. П. Бубукин та савăтра ĕçлесе ÿснĕ çамрăк. Стахановла ĕçленине курса ăна 1936 çулта нормировшчиксен курсне йанă. Курсран килсен, савăтра аслă нормировщик пулса татах та лайăхрах ĕçлесе пынă. Хĕрлĕ Çара А. Агафонăв призывнике те ăсатрĕç. Вăл механикă цехĕнче токăр пулса ĕçленĕ, стахановĕц. Савăтри рабочисен вечĕрĕнче вăл сăмах каларĕ:

— Епĕ савăтра ĕçлесе çын пултăм. 1935 çулта савăт строительствине çĕр чавакана кĕтĕм. 1936 çулта курсра вĕренсе тухнă хыççăн, механикă цехĕнче токăрта ĕçлеме пуçларăм. Техникăна йуратса вĕреннипе, станока тата хам ĕçе йуратнипе епĕ квалификацилĕ рабочи пулма пултартăм.

Халĕ мана Хĕрлĕ Çар ретне илчĕç. Паллах ĕнтĕ, малтан епĕ рйадовой красноармеец пулăп. Манăн ĕмĕт—Хĕрлĕ Çарăн командирĕ пуласси.

Приморйери 1-мĕш çар бойецĕсем Йапони самурайĕсене çапса çĕмĕрчĕç. Хасан кÿлли патĕнчи çапăçу пирĕн çĕршывра геройсем нумай пуррине кăтартса пачĕ. Епĕ те çавсем пек патриот пулатăп. Сталин йачĕпе çар ĕç техникине çĕнсе илетĕп, Клим Ворошилăв йертсе пыракан Хĕрлĕ Çарăн стахановĕц-командирĕ пулатăп,—терĕ.

Хĕрлĕ Çар ретне кайнă çамрăксем çар техникине стахановла вĕренсе пыма, тăван çĕршыва çирĕп сыхласа тăма пулчĕç.

Ласточкин.

Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ хупăннă

Çентабĕрен 15-мĕшĕнче Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ хупăннă.

Пленум 1939 çулти Пĕтĕм Сойузри халăх переписĕ çинчен ССРС Государствă План Комиççи çумĕнчи халăх-хуçалăх учочĕн управлени начаљникĕн Саутин йулташăн докладне итленĕ. Ку ыйту тăрăх пленум решени йышăннă. Вăл решенире профсойузсен тĕп комитечĕсене пурне те çитес вăхăтра пулакан Пĕтĕм Сойузри перепис политикă тата халăх хуçалăх тĕлĕшпе мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен сойуз членĕсем хушшинче массăлă ăнлантарулă ĕçе туса ирттерме хушнă.

Пленум Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VI-мĕш пленум решенийĕсене пурнăçа кĕртсе пыни çинчен тата социаллă страховани совечĕсен ĕçĕ çинчен Шверник йулташ тунă доклад тăрăх постановленисен пройекчĕсене сÿтсе йавса йышăннă.

Пленум профсойуз членĕсем Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти Историйĕн Кĕске курсне вĕренесси çинчен решени йышăннă. Пленум профсойузсене консуђтацисем, лекцисем, докладсем, выстăвкăсем организацилеме хушнă, çак калама çук ăслăлăхлă ĕçе тарăнăн вĕренес ĕçре ĕççынни массисене пулăшма хушнă.

Пленум халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ патне пысăк çĕкленÿпе саламлă çыру йама йышăннă.

(ТАСС).

ЙУТ ÇĔРШЫВСЕНЧЕ

Чехословакири лару-тăру

Генлейнăвĕцсен путчĕ арканса кайнă

Çентабĕрĕн 14-мĕшĕнче каçхине илнĕ сведенисем тăрăх, генлейнăвĕцсен путчне йăлтах аркатса тăкнă. Габерсбирк хулине пăлхавçăсенчен тасатас ĕçе каçхине ултă сехет тĕлне туса пĕтернĕ. Вăл хулана икĕ пин генлейнăвĕцсен штурмовикĕсем çирĕппĕн кĕрсе ларнă пулнă. Генлейнла пăлхавçăсене хирĕç бронемашинăсем тата танксем кăларнă. Кĕске вăхăт хушши çапăçнă хыççăн, вăл çапăçура 14 жандарма тата 30 генлейнăвĕца вĕлернĕ, генлейнла пăлхавçăсем парăннă.

Каçхине генлейнла путч вучахне чикĕ çывăхĕнчи Швадербах хулинче те йăлтах пĕтерсе хунă.

Генлейнла путчра вилнисем пурĕ 65 çын шутланать. Вăл шутра 26 чех тата 39 генлейнăвĕç.

(ТАСС).

Чемберлен Берлина вĕçсе кайать

ЛОНДĂН, çентабĕрĕн 15-мĕш. (ТАСС). Рейтер агĕнтстви, официаллă сведенисем çине кăтартса, çапла пĕлтерет: Гитлĕрпе курса калаçас шутпа Чемберлен Берлина вĕçсе кайать.

Чемберлен Германире

Çентабĕрĕн 15-мĕшĕнче Германине, Гитлĕрпа калаçма, Англин премйер-министрĕ Чемберлен пынă.

* * *

Чемберлен Гитлĕр патне кайнă хыпар Чехословакири, Англири, Францири, Швейцаринчи общĕствăлă çынсем хушшинче пысăк пăшăрхану тунă. Чехословаки хаçачĕсенчен нумайĕшĕ Чехословаки правительствине чĕркуççи çине лартма Англипе Франци йенчен çĕнĕрен вăйлăн хĕсне пултарассине асăрхаттараççĕ.

Англири хăшпĕр çынсем—Чемберлен Гитлĕрпа калаçса татăлас тесе демократилĕ çĕршывсен интересĕсене пĕтĕмĕшпех сутасси умĕнче те чарăнас тăрас çук, тесе шутлаççĕ.

Францири коммунисла партин хаçачĕ „Юманите“, Чемберлен Гитлĕр патне кайни вăл намăсла ĕç, тесе çырать. Хаçат çапла çырать: Чемберлен Гитлĕр патне кайни мире сыхласа хăварма пулăшмасть çеç мар, вăл Чехословакине Германине сутма пулăшать,—тет.

Швейцаринче тухакан „Травай“ хаçат Чемберленăн Испани ыйтăвĕнчи политикине астутарса, çапла çырать: „Чемберлен Германине Чехословаки республикине сутмали план тума кайнă тенинчен хăрама пур сăлтавсем те пур. Çакăнпа пĕрлех вăл тĕнчери общĕствăлла шухăша та улталама пăхĕ. Анчах та Чехословаки халăхĕн тата ытти мĕн пур халăхсен Чемберленăн маневрисене ĕçе кĕртме памала мар“.

(ТАСС).

Англи министрĕсен канашлăвĕ

ЛОНДĂН, çентабĕрĕн 14 мĕш (ТАСС). Ĕнер Англи министрĕсен канашлăвĕ пулса иртнĕ. Канашлура Чемберлен, Галифакс, Саймон тата Хор пулнă. Кунсăр пуçне, канашлура çар министрĕ, тинĕс министрĕ, авиаци министрĕ тата Англин сывлăшри çар вăйĕсен командуйушчийĕ те пулнă. Гитлĕр сăмах калана май, министрсем Вăтам Йевропăри лару-тăру çинчен тăракан ыйтăва çĕнĕрен сÿтсе-йавнă. Йут çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Галифакс тата унăн заместителĕ Кадоган премйер патĕнчен каçхине 11 сехет тĕлне тухса кайнă. Галифакспа Кадоган канашлуран тухсан тÿрех йут çĕршыв ĕçĕсен министерствине кайнă.

„Ньюс кроникл“ хаçатăн политикăлă обозревателĕ çапла çырать: çак канашлура министрсем вăрçă мĕн пулсан Англин çар вăйĕсене вырнаçтарса тухмали плана пăхса тухнă тата мобилизаци планĕсене йышăнса çирĕплетнĕ. „Дейли Геральд“ хаçатăн дипломатилĕ обозревателĕ Йуер çапла çирĕплетет: министрсен канашлăвĕ хыççăн Гитлĕр патне çĕнĕрен хыттăн асăрхаттарса çырса йанă. Унтан: Франци хăратакан конфликт тухса кайас-мĕн пулсан, Англи вăл конфликта хутшăнмасăр тăрса йулма пултараймасть,—тесе пĕлтернĕ.

„Дейли телеграф энд морнинг пост“ хаçатăн дипломатилĕ обозревателĕ пĕлтернĕ тăрăх, Гитлĕр сăмах калана хыççăн министрсем оборонă ĕçĕсене лайăхрах тума кирли çинчен калаçса татăлнă. Обозревател сăмахĕсем тăрăх, Англипе Франци генерађнăй штабĕсем пĕр-пĕринпе тачăн çыхăнса тăраççĕ.

Рейтер агĕнтстви пĕлтернĕ тăрăх, пайан ирхине 11 сехетре Англи кабиначĕн ларăвĕ пулса иртнĕ. Ку ларура Чемберлен ĕнер министрсемпе тунă калаçусен резуђтачĕсене сÿтсе-йавнă.

Генлейна арĕслесси çинчен Чехословаки правительстви распорйажени кăларнă

ПРАГĂ, çентабĕрĕн 15-мĕш (ТАСС). Хеб хулинче генлейнăвĕцсен тĕп руководстви çуртĕнче генлейнăвĕцсен руководителĕсем Чехословаки республикĕн йĕкама пăхăнмасăр пурнассине хирĕç пăлхав организацилевине тата çак ĕçре вĕсем йут çĕршывсенчи державăсемпе организацилĕн çыхăну тытнине тĕплĕн кăтартакан материалсем тупнă май, Чехословаки правительстви генлейнăвĕцсен партин лидерне—Генлейна арĕслесси çинчен распорйажени кăларнă. Генлейн Германине тарнă. Çакăнпа пĕрлех Судет облаçĕнчи чылай округсенчен генлейнăвĕцсен вырăнти организацисен руководителĕсем те Германине тарнă.

Чылай демократилĕ хаçатсен каçхине йатарласа тухнă кăларăмĕсем правительствăран генлейнла партине, вĕсен штурмăлă отрйачĕсене тата генлейнла организацисене пурне те хăлех саланса йама, генлейнăвĕцсен хаçачĕсене хупма, Судет облаçĕнчи пур округсенче те чрезвычайлă лару-тăру туса хума тата генлейнла лидĕрсене пурне те арĕслеме ыйтса çыраççĕ.

(ТАСС).

Испанири фронтсенче

Хĕвелтухăçри фронтра, Ебро йуханшыв районĕнче, республиканĕцсемпе пулнă йулашки çапăçусенче йăвăр çухатусем тÿснĕ пăлхавçăсем хăйсен питĕ те йухăнса пĕтнĕ çарĕсене реорганизацилеме пуçланă. Фашиссем республиканĕцсен позицийĕсем çине артиллерирен вим йĕркене пĕлмесĕр персе тăраççĕ.

Ытти фронтсенче улшăнусем çук.

(ТАСС).

Кĕскен

●● Германирен илнĕ сведенисем тăрăх, Германин Чехословаки чиккисем патĕнчи мĕн пур районĕсенче кĕраки тума чарнă. Çакăн пек туни вырăнсенчи халăхсене хытă хăратса пăрахнă.

●● Америкă çарĕнче танксене хирĕç çапăçма çĕнĕ йышши орудие усă кураççĕ. Çав 37 миллиметр калибрлă оруди снарйадсене çав тери хăвăрт перет. Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи çар штабĕн начаљникĕ каланă тăрăх, çав оруди тĕнчере чи лайăххи пулса тăрать.

КИТАЙРИ ВĂРÇĂ

Центрти Китайра, Цзйанси провинцин çурçĕр пайĕнче, çирĕм кун хушши пĕр чарăнмасăр вăрçнă хыççăн, йапонĕцсем Жуйчанран хĕвеланăç йенче китайĕцсен оборонă линине татса кĕнĕ. Китай çарĕсем патне подкрепленисем çитнĕ хыççăн йапонĕцсен наступленине чарса лартнă.

Йанцзы йуханшывĕ патĕнчи фронтра йапонĕцсен пысăк çухатусем пулаççĕ. Йулашки вунă кун хушшинче кăна йапонĕцсен, вилнисемпе аманнисене пĕрле илсе шутласан, 60 пин çынна йахăн пĕтнĕ. Вĕсенчен 12 пин çурă вилнисем, 39 пин çын—аманнисем. Йапонин 6 пин ытла салтакĕ холерă чирĕпе тата ытти епидеми чирĕсемпе чирленĕ, вĕсене Йапонине ăсатнă.

Йанцзы йуханшывĕ патĕнчи фронтра Китай çарĕсем йапонĕцсене хирĕç калама çук хыттăн тăрса вăрçнă пирки, йапонĕцсем Аньхуей провинцин хĕвеланăç пайĕнче тата Хенаҥ провинцин кăнтăр-хĕвелтухăç пайĕнче наступлени тума пуçланă. Йапонĕцсем кунта пилĕк колоннăпа наступлени туса пыраççĕ. Вĕсем Бейпин—Хаҥкоу чукунçулĕ патне тухса сарлака фронтпа Ухаҥ çине наступлени тума шутлаççĕ.

Ухаҥ хулишĕн пысăк хăрушлăх пулса тăракан вăл—йапонĕцсем Лучжоу—Синйан шоççе çулĕ тăрăх наступлени туса пыни пулать. Ку районта Китай командованийĕ хађхи вăхăтра пысăк подкрепленисем илсе пынă.

Кăнтăр Китайра çентабĕрĕн 13-мĕшĕнче Йапонин 32 самођочĕ Кантон—Хаҥкоу чукунçулĕ çине çĕнĕрен вĕçсе пынă, çавăн пекех тата Гуанси провинцинчи чылай пунктсем çине те тапăннă. Китай пичечĕ пĕлтернĕ тăрăх, Йапонин нумай самођочĕсене, Кăнтăр Китайри тĕрлĕ пунктсем çине пырса бомбăсем пăрахакансене, Германипе Итали ђотчикĕсем тытса пыраççĕ.

(ТАСС).

Контрођ тума йышăннă

Румыни правительстви çентабĕрĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа, оборонă валђи продукци тăвакан мĕн пур промышленнăçлă предприйатисене контрођ тума йышăннă. Вăл контрођ çар нушисене пĕтĕмпех çырлахтарас шутпа, çĕршывăн производствă тата чĕртавар ресурсне палăртса хатĕрлемеле.

(ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

ПСК(б)П Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ

А. А. Волкăв йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем, пирĕн парти, февраль-мартри Пленум хамăрăн партин çулпуçĕ Сталин йултуна доклад тăрах йышăннă историле решенисене пурнăçа кĕртсе пырса, халăх тăшманĕсене çĕмĕрсе тăкас, пĕтерсе хурас тĕлĕшпе пысăк ĕç турĕ.

Сталин йулташ вăл Пленумра тунă докладĕнче: пирĕн партин конференцийĕсем, пленумĕсем, активсен ĕçе коммунистсемшĕн, парти работникĕсемшĕн политикă тĕлĕшпе ÿсмели тата политикăла сыхлăхпа хĕçпăшалланмали пит пысăк шкул пулса тăраççĕ, тесе кăтартса пачĕ. Çавă енте пирĕн партири кашни конференци, кашни пленум тата парти активен ĕçĕ критикăна сарса йарас, хамăрăн ĕçри çитменлĕхсене палăртас йенĕпе пит пысăк стимул пулса тăнине пĕлтерет.

Епĕ, Лапин йулташ доклачĕн содержанийĕ лартнă ыйтупа килĕшÿлĕ маррине конференцине кăтартса парас тесе, калама çакăнпа пуçларăм. Хуçалăх руководстви, профсойуз руководстви йенчен Лапин йулташ пире начар мар калаçа пачĕ, анчах партин хула комитечĕн руководителĕсем ĕç çинче мĕнле пăхни çинчен каланине, — ыйтăва политикăла лартнă чухне çавă кирлĕ,— епĕр илтмерĕмĕр.

Конференци делегачĕсем нумай илтсе пĕлеттĕр, партин хула комитечĕ, партин облаç комитечĕ сăтăрлăх йулашкисене пĕтерессишĕн, троцкисла-бухаринла, олокри тата национал-фашисла тăшмансен йулашкисене тупса тытассишĕн чăнипе мĕнле кĕрешнине пĕлĕпĕр, тесе шансах кĕтсе тăчĕç. Ку тĕлĕшпе пирĕн мĕн каламали пур тата калас та пулать. Анчах, пăшăрханмала та, ыйтăва çавăн пек лартнине епĕр илтмерĕмĕр. Конференцин политикăлă докладра тăшмана аçта, хăш организацире тата мĕнле тупса палăртнине, сăтăрлăх йулашкисене пĕтерме мĕнле ĕçсем тунине примерсемпе кăтартса пама ыйтма тивĕç пур. Пире Тĕп Комитет çапла верентет, февраль-мартри Пленум Сталин йулташ доклачĕ тăрах çавăн пек решени йышăннă. Анчах кунта епĕр, пăшăрханмала та, çавна илтмерĕмĕр. Вăл çапла пулсан, ĕçре çавăн пек фактсем çук пулсан, ăнланмала ĕнтĕ, чăн-чăн кĕрешÿ те чăн-чăн мобилизаци те пулма пултараймасть, çавă вăл — пĕтĕм организацийе, уйрăмăн илсен партин кашни членне политикă тĕлĕшпе ÿстермест. Епĕ, йулташсем, çакăн пек политикăлă доклада партин хула комитечĕн иккĕмĕш çекретарĕ туни тĕрĕс мар, тесе шутлатăп. Пĕррĕмĕш çекретар кунтах вĕт. Мĕншĕн-ха вăл конференци умĕнче отчот тытмасть? Çавна епĕ пĕртте ăнланмастăп. Хула организацин конференцийĕ республикăра ĕç мĕнле тăнине, партин облаç комитечĕ тата пĕррĕмĕш çекретарĕ Иванов йулташ хăй ку тĕлĕшпе мĕнле ĕçлевине пĕлесшĕн.

Лапин йулташ кунта темиçе çын йатне каларĕ, партин хула комитечĕ Федарăва, Шумилăва, Самарина, Соколъникăва т. ыт. те партирен кăларчĕ, терĕ. Ĕç çавăн пек пулса пымасть, тесе калатăп епĕ. Парти организаци умĕнче отчот тунă чухне ĕç мĕнле тăнине йăланах тĕрĕссипе каласа памала. Епĕ çакна пĕлетĕп: асăннă çав çынсенчен хăш перисен ĕçĕсене пуçламĕш парторганизацисене пăхса тухма обкомран панă. Вăл, тĕрĕссипе астăватăп, обком бÿровенче августăн 8-мĕшĕнче пулнă, унчухне çавăн пек ĕçсене чылайĕшне пуçламĕш парторганизацисене панăччĕ. Çапла ку ĕçе хула комитечĕ хăй туман, çав çынсене вăл мар туртса кăларнă, ăна материал панă çеç.

Соколъникăв пирки, çав предатĕл усал троцкист пирки, ĕç тĕрĕссипе мĕнле тăнине, çынсем ăнланса илччĕр тесе, парти организацин конференцине каласа памалаччĕ. Соколъникăва арестленĕ чухне те унăн партбилет пулнă, ун çинчен ыйтăва хула комитечĕнче тата пуçламĕш организацинче сÿтсе-йавман. Соколъникăва 1929 çулта троцкисăмшăн партирен кăларнă пулнă. Мĕншĕн-ха çавă вăл партин хула комитечĕшĕн çав предатĕл-троцкиста тупса тытмали, çавăн тăрах пуçламĕш парторганизацине верентмели пулса тăман? Çавна туман пулнă. Çав предатĕл-троцкист обком тата хула комитечĕ куçĕ умĕнчех троцкисла çулйĕр тытса пынă, çав предатĕл-троцкист, радиокомитетра ларса, политикăла пысăк ĕçсене тăвассине пасса пынă. Партин хула комитечĕ çавна мĕншĕн курман-ха? Партин хула комитечĕн пĕррĕмĕш тата иккĕмĕш çекретаресем çавна мĕншĕн курман-ха? Çав çын çинчен пĕлмен-ши вара? Çав çын çинчен Лапин йулташ каласа пама пултараймăн пулсан, Иванов—пĕррĕмĕш çекретарĕн—каласа памала пулнă.

Малала, çакнашкал етемсем—Ваструк, Матвейĕв, çав усал тăшмансем, руководствăра пулнă. Ыйтмала, парти обкомĕ, партин хула комитечĕ Спасăв çинчен ĕçе пĕлсе тăнă пулсан, Матвейĕв Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн пĕррĕмĕш заместителĕ мĕнле çын иккене çинчен шухăшласа пăхмала пулман-и вара? Вĕсем мĕнле çынсем иккене паллă пулнă вĕт! Лапин пĕлмен пулсан, ман шутпа, Иванов пĕлсех тăнă. Малала епĕ çакна ăнланаймастăп, политикă тĕлĕшпе шанчăксăр çынсене чылайĕшне мĕншĕн-ха нимĕн тĕрĕслемесĕрех йертсе пырас ĕçе лартнă? Лапин йулташ темĕншĕн çав ыйтусем çинчен нимĕн те каламарĕ. Çавăн çинчен каласа памалаччĕ, вăл çынсене есĕр пĕлетĕр, вĕсене пурте пĕлеççĕ, уйрăмăн илсен Иванов йулташ та пĕлет. Кунта критикăпа самокритикăна хисеплеменрен вăл çавăн пек пулса тăрать, тесе шухăшлатăп епĕ. Кунта парти Обкомĕнчен пуçласа хула комитечĕ тата райкомсем таранах критикăна тата самокритикăна хисеплемесçĕ. Çакăн çинчен епĕ кунта уççăнах калатăп.

Йулташсем, кун пек ĕçлеме йурамасть. Кун пек парти организацине мобилизацилеме çук. Пирĕн хамăрăн парти организацин массине çакăн пек воспитани парса пырас пулать: пирĕн партин кашни членĕ хăйĕн примерĕпе лайăх ĕçĕн теслĕхĕсене кăтартса пама пултартăр. Пире Тĕп Комитет çапла вĕрентет, пирĕн хамăрăн воспитани илсе, ыттисене те воспитани парса пымала, хамăрăн йăнашсем çинче хамăра тата парти членĕсене воспитани памала. Çавăнпа епĕ çапла шутлатăп: хула комитечĕпе Обкомăн руководствисем парти Тĕп Комитечĕ тата Сталин йулташ кăтартса панă политикăла задачăсен çÿлĕшĕнче мар.

Иванов йулташ йертсе пыма пултараймасть, тесе шухăшлатăп епĕ,—конференцин çак лартнă ыйтăва тивĕçлипе сÿтсе йавмала. Конференцин ку ыйтăва политикăла задачăсен çÿлĕшĕнче пулса сÿтсе-йавмала та хула комитечĕн малашнехи ĕçĕсене валъли решени йышăнмала.

Партилĕ ĕçе хуçалăхла ĕçсенчен уйăрмала мар

Трак. Çентаберĕн 12-мĕшĕнче партин районри организацин пухăвĕ пулса иртрĕ. Пуху май уйăхĕнчи суйлав пухăвĕ йышăннисене пурнăçласа пыни çинчен тата тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерсе пырасси çинчен сÿтсе-йаврĕ. Ку ыйтупа парти райкомĕн пĕррĕмĕш çекретарĕ Свешникăв йулташ доклад турĕ.

Пухура 23 çын тухса калама çыранчĕç, 15 çын тухса каларĕç.

Иренире тухса каланă йулташсем районри çĕрĕç пайĕ, МТС, сыхăну, суту-илÿ ĕçĕнче ĕçлекенсем тăракан пуçламĕш парторганизацисем тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене пĕтерессишĕн çителеклĕ кĕрешменнине палăртрĕç. Район центрĕ çывăхĕнчи Тракри „Победа" колхоз председателĕ Борисăв ĕç дисциплинине аркатса йанă, колхозра пĕтĕм ĕç кайа йулса пырать, çавăн пекех „Чапай" колхоз председателĕ Иванов, „Партизан" колхозăн—Кортлов йăпах ĕçлеççĕ.

МТС кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе начар ĕçленипе уй-хир ĕçне тытăнсан комбайнсемпе, молотилкăсемпе ĕçлеме пĕлейменнисем пулчĕç. Машинăсем вăхăтсăр ваннипе простойсем пулчĕç. Çапла комбайн ĕçне 65, 61 процент, МТС и пĕтĕм производствăла планне 58 процент çеç тултарнă.

Выльăх черлĕх ĕрчетес ĕçре те çитменлĕхсем пур-ха. Халĕ выльăхсем валъли апат хатĕрлес ĕç йапăх пырать. Çилос хывас плана 9 процент анчах тултарнă. Районра ытти участкăсенче те çитменлĕхсем нумай.

Кăçалхи çул Албахтинăри туллимар вăтам шкул, Упири вăтам шкул, пульничица, квартир çурчĕ, типографи тата ытти строителствăсем пулмала. Халĕ пульничицăна тупа та ситереççĕ. Типографи çуртне çу каçа туса та çивитти таран улăхтарнă та чарăнса тăнă. Ваттисен çурчĕ—çуррине мăкланипе иккĕмĕш çул ларать. Албахтинă шкулĕ никĕсĕрен çÿлех хăпарман. Упи шкулне тăвассишĕн колхозниксем хастарлăн тăрăшаççĕ, кирлĕ материалсене кÿрсе çитерне пулсан та, строителствă пуçăнман. Çутĕç Халăх Комиссариачĕ шкул çурчĕн пройектне августăн 23-мĕшĕнче тин йанă, техникăла смета пайан кун та çук-ха. Строителствă йулса пыни техниксемпе деçатниксем пулса шанчăксăр çынсем ĕçленинчен те нумай килет.

Вĕренÿ çулне хатĕрленес йенĕпе те çитменлĕхсем сахал мар пулнă. Районри çутĕç пайĕн руководствин шкулсенче вĕренÿ ĕçне вăйлатас тĕлĕшпе хытăн ĕçлемеле.

Сыхăну кантурĕ ĕçне Филиппăв, Думнăв коммунистсем йертсе пыраççĕ пулсан та, ĕçсем йăпăх. Дисциплинă çук. Райĕçтăвком 44 пин тенкĕ расхут кăларса радиоузел çуртне туса панă та иккĕмĕш çул ĕнтĕ пралук çуккипе ĕç тарать. Чăваш республикĕнчи сыхăну управленийĕ радиокомитетта радиоузела туса пĕтерме тăрăшмаççĕ.

Районри кустарлă-промысла ертелесенче те сăтăрла ĕçсен йулашкисене пĕтерес ĕç начар тарать. Кустарлă-промысла ертелесем хăйсен производствăла планĕсене тултарас тĕлĕшпе йăпăх ĕçлеççĕ. Çенйал Шетмĕри ертел производствă планне 66,7 процент, Вутланти—73,7 процент, Карайри—67,7 процент анчах тултарнă.

Районри парти организаци, вăйлă самокритикă сарса, тăшмансен сăтăрла ĕçĕсен йулашкисене тата ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме коммунистсене тивĕçлĕ кăтартусем парса хăварчĕ.

Закамский.

Шишкин йулташ конференцийе хупнă чухне каланă сăмах

Йулташсем, партин Шупашкар хула организацин V-мĕш конференцийĕ хăйĕн ĕçĕсене туса пĕтерет.

Тăшмансен сăтăрлăхĕн йулашкисене пĕтересси çинчен сÿтсе-йавни тата ку ыйту тăрăх йышăннă решени партин хула комитечĕ тата пуçламĕш парторганизацисем чылайĕшĕ сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе тата фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсен йулашкисене тăпăлтарса кăларас ĕçре мĕншĕн çителĕксĕр ĕçлесе пынин сăлтавĕсене болъшевикла тÿррĕн уçса палăртрĕç.

Конференци партин хула комитечĕн политикăла пысăк йăнăшĕсене тата хула комитечĕн пĕррĕмĕш çекретарĕ пулнă Иванов хăйне болъшевисăма хирĕçле тыткаланине тÿррĕн уçса палăртрĕ. Вăл, Иванов, парти организацийе халăх тăшманĕсемпе вĕсен сăтăрла ĕçĕсене тĕрĕ шыв çине кăларма мобилизацилемен анчах мар, ку ĕçре хула комитечĕн тата пуçламĕш организацисен ĕçĕсене пур майпа та чăрмантарса пынă. Иванов икĕ питлĕ пулнă, тăшманла елементсене хÿтленĕ. Вăл критикăна хĕстернĕ, сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе чăннипе ĕçлес вырăнне декларацисем тунă, пуш халлап йанă.

Конференци хула комитечĕн пĕррĕмĕш çекретарĕ пулнă Иванова ĕçрен кăтертрĕ тата хула комитетне сăтăрлăх йулашкисене пĕтерес тĕлĕшпе тивĕçлипе ĕçлеме хушрĕ. Конференци решенийĕ хула комитечĕн кашни членне идиотла чиреле лăпланса ларассине татăклăн пĕтерме, халăх тăшманĕсене тата вĕсен сăтăрлă ĕçĕсене тупса палăртас тĕлĕшпе сăмахпа çеç мар, чăннипех ĕçлеме хушать.

Хула комитечĕн кашни членĕ çакна ăнланса илмеле: вăл хула комитечĕн тата хулари пĕтĕм парторганизацин ĕçĕсемшĕн ответлă. Хула комитечĕн кашни членĕн çакна пĕлсе тăмала: ун çине—хула комитечĕн членне суйласа—пит пысăк шанчăк хунă, çав шанчăк ăна çивĕч куçлă, сыхăлăхлă, тăшмансемпе нихăçан килĕшми пулма хушать. Хула комитечĕн кашни членĕн хулари парторганизацин пĕтĕм ĕçĕсене пĕлсе тăмала, Тĕп Комитетăн февраль-мартри тата йанварти Пленумĕсен историлĕ решенийĕсене тата Сталин йулташ çав Пленумсенче панă кăтартусене, çавăн пекех тата хулари V-мĕш партконференци решенийĕсене пурнăçа кĕртессишĕн хула комитечĕн кулленех ĕçлемеле.

Хулари пуçламĕш организацисен пурин те тата кашни коммунисăн хулари V-мĕш партконференци решенийĕсенчен хăйсене валъли уроксем илес пулать. Ĕçсене татăклăнах çĕнĕле йĕркелесе йамала. Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме критикăпа самокритикăна сарса йамала. Хулара партилĕ политикăлă ĕçсене вăйлатмала, коммунистсен револъцилĕ сыхăлăхне хăпартмала.

Сталин йулташ партилĕ ĕçе хуçалăх ĕçĕнчен тата хуçалăх ĕçне партилĕ ĕçрен уйăрма йураманни çинчен панă кăтартăва пĕр минутлăха та манма йурамасть.

Çакна пĕр минутлăха та манма йурамасть: ССР Сойузĕ капиталисăмла йĕри-тавралăхра пурăнать, капиталисăмла йĕри-тавралăх пур чухне пирĕн пата шпионсене, сăтăрçăсене тата диверсантсене йарса тăраççĕ, вĕсем троцкиссемпе, буржуалă националиссемпе пĕрле, халăхăн тата ытти тăшманĕсемпе пĕрле социалисăм строителствин ĕçне сăтăрлама тăрăшаççĕ.

Конференци решенийĕсене партири тата партире мар кашни болъшевикăн пĕлсе тăмала, вĕсем парторганизацине халăх тăшманĕсен йулашкисене—уçса палăртмасăр йулнисене—тĕрĕ шыв çине кăларма мобилизацилемеле.

Йулташсем, конференцире ыйтусене пĕр шухăшлă пулса татса пани Шупашкар хулинчи парторганизаци пĕр шухăшлине, вăл Ленин—Сталин партин аслă ĕçĕсене вĕçĕмсĕр парăннине тата тăшманла елементсен йулашкисене аркатса тăкма, тăпăлтарса пăрахма пултарулине кăтартса пачĕ. Ĕçе тытăнар йулташсем. Ленин—Сталин партин ĕçĕшĕн! Малала, çĕнĕ çĕнтерÿсем туса пырар!

Çамрăксем херÿлĕ ĕçре

Пушнарти (Йĕтĕрне районĕ) Мичурин йачĕпе тăракан колхозри комсомол организацийĕ чĕрĕ, творчествăлă пурнăçпа пурăнать. Организаци йышĕ ÿссе пырать. Халĕ комсомолĕцсем 30 çын.

Комсомолĕцсем колхозри тĕрлĕ участкăсенче ĕçлеççĕ. I, II, III-мĕш бригадăсенче Кузнецов Фомичĕв, Скворцов йулташсем бригадирсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсен бригадисем ытти бригадăсемшĕн примĕр пулса тăраççĕ.

Комсомолĕц Василий Краснов кăçал колхоз шкулĕнчен вĕренсе тухрĕ. Кăçалхи тырпула пуçтарса кертнĕ чух ответлă ĕçре ĕçлерĕ.

Быкăв Михаилпа Бычкова Марийă комсомолĕцсем сысна ферминче стаханăвла метăдсемпе ĕçлеççĕ. Спиридонăв 5—6 çул хушши тăварлă сысна ферми пуçлăхĕ пулса ĕçлет. Вăл 18 пăт туртакан сысна аçи çитĕнтерчĕ.

Иртнĕ çулсенче колхоз утарĕ вăйсăр пулнă. Вĕллесем лартма, ытти хатĕрсене вырнаçтарма та утарта çуртйĕр пулман. Унта Мокейĕв, Токарĕва, Илйина çамрăксем тата комсомолĕц Алексейĕв Софрон йулташсем ĕçе тытăнчĕç. Халĕ утарта кирлĕ таран çуртсем пур, çавăнтах хуртсене хĕлле лартмали омшанник та пур. Хуртхăмăрсем 200 вĕллерен иртеççĕ.

Организацинчи комсомолĕцсем хальхи вăхăтри çитĕнÿсене çирĕплетсе, Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнин уйавне, пуçламĕш организацисен отчотпа суйлав кампанине тата пысăкрах çитĕнÿсемпе иртерме хатĕрленеççĕ.

Ваç. Токарĕв.

Çĕнтерÿ тумали болъшевикла искусствă

„Правда" хаçатра пичетленекен Пĕтĕм Сойузри Коммунистсен (болъшевиксен) Парти Историйĕн Кĕске курсне мĕн пур болъшевиксем—партире тăракансемпе партире тăманнисем те—пысăк чаплă событи пек кĕтсе илчĕç. Çак аслăлăхла калама çук чаплă ĕçĕн вăйĕ вăл акă мĕнре: вăл кашни коммуниста револъцилле кĕрешÿ опычĕпе хĕçпăшаллантарать, пĕтĕм тĕнчери аслă пролетарилĕ çарăн боецĕсене воспитани парать.

ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕн пайăн пичетленсе тухакан сакăрĕмĕш сыпăкĕ çине вулакансем уйрăмах тимлĕн çаврăнса пăхĕç. Вăл сыпăк граждан вăрçин мухтавлă, нихăçан манми кунĕсем çинчен, Ленин—Сталин партийĕ йертсе пыракан пирĕн халăх йут çĕршыв интервенчĕсемпе тата шургварди бандисемпе кĕрешсе мĕнле хăй никама пăхăнмасăр ирĕклĕн пурăнассине сыхласа хăварни çинчен каласа парать. Çак вăл вырăс револъцин чи çивĕч тапхăрĕ пулнă, çак вăл рабочисемпе хресченсен çамрăк, тин çеç çуралса тухнă социалисăмлă государствишĕн вилĕмле хăрушă сехет пулнă. Марксисăм-ленинисăмпа хĕçпăшаллантнă парти çеç, хăйĕн хыççăн халăх пыракан парти çеç çĕнтерĕве организацилеме тата тăшмансене çĕмĕрсе тăкма пултарнă.

Октаберти Аслă револъци буржуази лагерĕнче пăтраштару тумасăр тăма та пултараймăн. Мĕн пур çĕршывсенчи капиталиссем хăйсен пурнăçĕ хăрушлăх умĕнче тăнине туйса илнĕ. Вĕсен куçĕ умĕнчех вырăс капиталисĕсемпе помещикĕсене ĕмĕрсем хушши ларнă йăвисенчен хăваласа кăларса çĕклесе çапнă, вĕсем пулăшу ыйтнă. Совет влаçне хирĕç вăл пурăнма пуçласан малтанхи кунсенчех контрреволъцин вăйĕсем пухăнма тытăннăççĕ: антантăн йут çĕршывсенчи империалиссем тата Российăри контрреволъци, унтах меншевиксем, ес-ерсем, анархиссем, буржуалă националиссем тата халăха пăвса вĕлерекен ытти тăшмансем кенĕ.

1918 çулăн малтанхи çурмаçулĕнче йут çĕршывсенчи тата шалти совета хирĕçле вăйсем тăччăн пĕрлешеççĕ. Антантă интервенцийĕ — Российăна хирĕç тунă вăрçа, тата чи усал йышши вăрçа пулнă. Захватчиксен çарĕсем пирĕн территори çине чиксĕр майпа, вăрттăн, вăрă пек ана-ана йулнă.

Тапхăр çав тери йăвăр пулнă. Совет Российĕне апат-çимĕç, чĕртавар тата çунтармалли хатĕрсем парса тăракан тĕп районсенчен татса илнĕ. Пролетарилĕ центрсенчи, уйрăмах Мускавпа Ленинградри, халăх выçăпа тата сивĕпе аптранă.

„Анчах та рабочи клас кулянман. Кулянман болъшевиксен партийĕ. Çав тапхăрти калама çук пысăк йăварлăхсем тата вăл йăварлăхсемпе тимлĕн те çивĕччĕн кĕрешни—рабочи класра йепле пысăк вăй пытанса тăнине тата болъшевикла парти авторитечĕн вăйне мĕн пек виçесĕр пысăккине кăтартса пачĕç.

Парти çĕршыва çар лагерĕ туса хунă, унăн хуçалăхла тата культурăла-политикăла пурнăçне вăрçă ĕçне кирлĕ майлă улăштарса çĕнетнĕ. Совет правителстви „социалисăмла тăвăн çĕршыв хăрушлăхра" тесе пĕлтерни тата отпор пама халăха чĕннĕ. Ленин—„Пурте фронт валъли" тесе лозунг панă, вара çĕршер пин рабочисемпе хресченсем хăйсен ирĕкĕпех Хĕрлĕ Çара, фронта кайнă. Партипе комсомолăн пĕтĕм составĕнчен çуррине йахăнах фронта тухса кайнă. Йут çĕршыв интервенцин çарĕсем вăрçăпа тапăнса кĕнине хирĕç, револъци сирпĕтсе антарнă експлуататорлă классен пăлханăвĕсене хирĕç парти халăха отечĕствăлă вăрçа çĕклентернĕ" (ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ).

Йут çĕршыв захватчикĕсемпе шургварди генерăлĕсене хирĕç пулнă граждан вăрçине пĕтĕм халăх хутшăннă. Хĕрлĕ Çара хăвăрт пуçса йĕркелени тăшман тылĕнче партизанла йухăн çитенÿсем туни, çав тери вăйлăн хĕçпăшалланнă тăшмана хирĕç фронтра çитенÿсем туни пĕр çакăнтан çеç килнĕ: халăх отечĕствăлă вăрçа çĕкленнĕ.

Совет влаçĕ хăйĕн Хĕрлĕ Çарĕн хăватне ырми-канми вăйлатса пынă. Хĕрлĕ Çара тĕреклетес ĕçре коммунис-комиссарсем ĕçе татса паракан вырăн йышăнса тăнă, вĕсем çар ретĕсене пĕтĕçтерсе çирĕплетнĕ, хăйсем хăйулăхпа геройлăх примерне кăтартнă.

1918 çулти ноябĕр уйăхĕнче Германире револъци сарăлса кайнă, вăл револъци Вилъгельма тата унăн правителствине сирпĕтсе антарнă. Германи хăйне çĕнтернĕ тесе йышăннă, мир тăвасси çинчен ыйтма пуçланă. „Пĕррĕмĕш ретре тăракан державăна пĕррепсах иккĕмĕш ретре тăракан державă вырăнне антарса лартнă". Совет влаçĕ Брестра тунă саратулă мире пĕтерсе лартма май илнĕ. Парти хăйĕн пĕтĕм тимлĕхне интервентсемпе шургвардейĕцсене çĕмĕрсе тăкма хатĕрленес ĕçе йанă.

Партин 1919 çулти март уйăхĕнче пулса иртнĕ VIII-мĕш съездĕнче Сталин йулташ Хĕрлĕ Çар хăватне хавшатма тăрăшакансене пурне те хирĕç татăкла сăмах тухса каланă. „Йе,—тенĕ Сталин йулташ,—чăн-чăн Рабочисемпе Хресченсен çарне, ытларах хресченсенчен тăракан çар, çирĕп дисциплинилă çар тăвăпăр та республикăна хÿтлесе хăварăпăр, йе пĕтĕпĕр".

Хăйар 1919 çул! Империалисăмлă вăрçăра Германипе Австрине çĕнтерни Совет Российĕне хирĕç антанта çапа сине вăйлатнă. Блокада пирĕн çĕршыв пĕтĕм тĕнчепе сыхăнса тăрассине татса пăрахнă.

Тĕп йăвăрлăх кăнтăрта капланса килнĕ. Кăнтăр фронтĕнчи ĕçе Троцкий аркатса йанă, вара пирĕн çарсене тăшман çĕнтере-çĕнтере пынă. Тăшмансем Курск, Орйол хулисене туртса илнĕ, шуррисем Тула хулине хăратса тăнă, Деникин Мускав патне сывхарса пынă. Парти Тĕп Комитечĕ кăнтăрти фронта Сталин, Ворошилăв, Орджоникидзе, Буденный йулташсене йарать, вĕсене Деникина çĕмĕрсе тăкассине организацилеме хушать. Кăнтăрта Хĕрлĕ Çар операцийĕсене йертсе пырас ĕçрен Троцкийе сирсе йараççĕ. Сталин йулташ Деникина çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе Тĕп Комитета хăйĕн планне сĕнет: тĕп ваййа Харькăв — Донбасс — Ростов урлă йарса тăшмана çĕмĕрсе тăкмала. Çак план ыйтăва пĕртен пĕр тĕрĕссен татса пани пулнă: 1920 çул пуçламĕшĕнче пĕтĕм Украинăна тата Çурçĕр Кавказа шуррисенчен тасатнă. Совет Российĕ çине килсе капланнă вилĕмлĕ хăрушлăха сирсе йанă.

„1918—1920 çулсенче Тĕп Комитет, револъцишĕн чи хăйар та чи хăрушă вырăнсене суйла-суйла илсе, çапăçун пĕр фронтĕнчен тепĕр фронтне йарса тăнă пĕртен пĕр çын Сталин йулташ çеç пулнă теме те пулать. Ытти кăштăлăкăрах та шанчăклăрах вырăнсенче, пирĕн ĕçсем ăнăçлă пынă çĕрте, Сталин йулташ курăнман. Анчах, тĕрлерен сăлтавсене пула, хĕрлĕ çарсем шатăртатса тăнă вырăнсене, контрреволъцилĕ вăйсем, хăйсен ĕçĕсене ăнăçтарса йарса, Совет влаçĕн кун çулне пĕтерес патнех çитерне çĕре, пăтрашăнупа паникă пулатăркач пĕр самантрах аптраса ÿкес, ĕçе пĕтерсе хурас хăрушлăх пур вырăнсене—йăланах Сталин йулташ пынă" (Ворошилăв).

Йут çĕршывсен вăрçăлă интервенцийĕпе граждан вăрçи пĕтĕм совет влаçĕн историлĕ çĕнтерĕвĕ пулнă. Выçă тата çĕтĕк-çатăк, йăпăх хĕçпăшалланнă Хĕрлĕ Çар отличнă хĕçпăшалланнă интервентсемпе шургвардейĕцсене çĕмĕрсе тăкнă, мĕншĕн тесен вăл халăх интересĕсене хÿтленĕ. Халăх хăйĕн çарне пулăшнă, вăл халăх телейĕшĕн çапăçнине пĕлнĕ. Капиталисăмлă çĕршывсен пĕрин те çавăн пек çар пулмасть тата пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен унта çарпа халăх хушшинче тĕпсĕр шăтăк выртать.

„Хĕрлĕ Çар акă мĕншĕн çĕнтернĕ: вăл хăйĕн халăхĕшĕн вĕçне çитийех тĕрĕс тăвă, çакăншăн ăна халăх хăйĕн тăван çарĕ пек йуратса пулăшу панă. Хĕрлĕ Çар халăх ачи пулса тăрать, вăл, хăйĕн амăшĕн шанчăклă ывăлĕ пекех, хăйĕн халăхĕшĕн тĕрĕс тăрать пулсан, ăна халăх пулăшса тăрать, вăл çĕнтерме тивĕçлĕ. Хăйĕн халăхне хирĕç пыракан çар поражени тÿсме тивĕçле" (ПСК(б)П Историйĕн Кĕске курсĕ).

Хĕрлĕ Çар акă мĕншĕн çĕнтернĕ: унăн чунĕ, тыла тата фронта йертсе пыракан чăмăрĕ—болъшевиксен партийĕ, Ленин—Сталин партийĕ пулнă, вăл парти кĕрешÿре шикленме пĕлмест.

Хĕрлĕ Çар Фрунзе, Ворошилăв, Буденный тата ыттисем пек çĕнĕ типлă çар руководителĕсем туптаса кăларма пĕлнĕрен çĕнтернĕ. Хĕрлĕ Çар ретĕнче Котовский, Чапайĕв, Лазо, Шчорс, Пархоменко пек тата ытти нумай çавăн пек хăйсен тĕллĕн пулнă геройсем çапăçнă. Хĕрлĕ Çарăн политикăлă хăватне Ленин, Сталин, Молотăв, Калинин, Свердлов, Каганович, Орджоникидзе, Кирăв, Куйбышĕв, Микойан, Жданăв, Андрейĕв, Петровский, Йарославский, Йежов, Дзержинский, Шчаденко, Мехлис, Хрушчов, Шверник, Шкирйатăв тата ыттисем пек дейателсем туптаса пиçĕхтернĕ.

Пит нумай тăшмансемпе кĕрешнĕ çĕрте пирĕн çĕршыв пĕччен пулман. Ăна пĕтĕм тĕнчери пролетариат хута кĕрсе пулăшу панă.

Российăри граждан вăрçин опычĕ тĕнчипе пысăк вырăн йышăнса тăрать. Пирĕн пример тăрăх пĕтĕм тĕнчери пролетарисемпе пусмăрта пурăнакансем кĕрешме тата çĕнтерме вĕренеççĕ. Пĕтĕм халăх çĕкленсе тăрсан, ăна хирĕç тăма пултаракан вăй çуккине вĕсем кураççĕ. Пирĕн партин историйĕ капиталисăмлă çĕршывсенчи мĕн пур ĕçлекенсене çĕнтерÿ тумали болъшевикла искусствăна вĕрентет. Халь, тĕнчери йунлă вăрçă хăрушлăхĕ çĕнĕрен капланса килнĕ чухне, фашисла захватчиксем халăхсене çаратса тата ирĕксĕрлесе, йут çĕршывсем çине вăрçăпа тапăна-тапăна кĕрсе кайнă чухне, никама пăхăнмасăр пурăнакан ирĕклĕ пурнăçа хаклакансемшĕн пуриншĕн те, мирлĕн тăрăшса ĕçлес текенсемшĕн пуриншĕн те пирĕн партин, пирĕн халăхăн опычĕ калама çук хаклă опыт вырăнче шутланать.

Пирĕн опыт республикăлă Испанипе Китайри паттăр боецсен аллинче хăйар хĕçпăшал пулса тăрать, вĕсем халăхсене вилĕм тата йухăнчăк кÿрекен фашисла интервентсене хирĕç кĕрешеççĕ.

Хăватлă чулту пек çĕкленсе тăрать Советсен çĕршывĕ. Ленин—Сталин партийĕ ăна валъли никама пăхăнман ирĕк пурнăç туса пачĕ. Болъшевикла парти интервентсене пирĕн çĕршыва çуркаласа тăкма памарĕ. Вăл халăха кĕрешÿ вучахĕ витĕр илсе тухса социалисăмăн пĕтĕм тĕнчипе историлĕ çĕнтерĕвĕсене турĕ. „Пирĕн çынсем нумай йун йухтарни харама каймаринне, вăл хăйĕн результачĕсене панине пĕлме кăмăллă та, савăнăçлă" (Сталин). Епĕр тăшмансен хатланăвĕсене хирĕç кирек хăш минутра та аркатса тăкмалăх çапма хатĕр пулса, йăланах тата пур çĕрте те мобилизацилĕ хатĕр тăратпăр, халăх телейĕ çине алă çĕклеме нихăçан никама та ирĕк памастпăр.

(„ПРАВДА" умстатйи, çентаберĕн 15-мĕш).

Обйазатĕлствăсене вăхăтра пурнăçламала

Сталинла Конституци совет гражданĕсене панă правасемпе обйазаннăçсем вĕсем пĕр-пĕринпе уйăрăлми таччăн çыхăнса тăраççĕ. Çавăнпа та, кашни гражданинăн государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене вăхăтра пурнăçласа пымала. Трак йалсоветĕнчи (çав районах) Кайри Карăк йалĕнчи Е. Константинăв йединоличник государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене пĕрре те вăхăтра пурнăçламасть, йалан кайа йулса пырать. Хăшпĕр йалсоветсенче тата йединоличниксене общĕствăлă пурнăçран айакка тăратса хăварнă, вĕсене хуçалăхпа политикăлă кампанисен планĕсене тултарнă çĕре питĕ çителĕксĕр хутшăнтарса пынă. Çавăн пирки те, Трак районĕнчи Терер йалсоветĕнче колхоза кĕрсе çитеймен хуçалăхсем (вĕсем пурĕ 17 хуçалăх) государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене вăхăтра тултарса пымаççĕ. Çав хуçалăхсенчен пĕри те государствăна тырă парса татман.

Государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене тултарас ĕçре халех кирлĕ улшăну тумала. ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсем çинчен колхозниксемпе йединоличниксене ăнлантарса парассине государствă умĕнчи обйазатĕлствăсене пурнăçлассипе таччăн çыхăнтарса пымала.

Пахча-çимĕçсенчен 50 пин тенкĕлĕх тупăш

Чучукассинчи (Шупашкăр р.) Молăтăв йачĕпе тăракан колхоз пахча-çимĕçсенчен çулсеренех пысăк тупăш илет. Кăçал пахча-çимĕçсем ăйлă пулнă. 0,85 гектар çинчен 200 центнĕр хăйар, çур гектар çинче 103 центнĕр ир пулса çитекен купăста пуçтарса илнĕ. Государствăна обйазатĕлствă тăрăх пахча-çимĕçсем парса татнă хыççăн, пасарта сутса пахча-çимĕçсенчен 27 пин те 215 тенкĕлĕх тупăш илнĕ. Хаљ тата 23 пин тенкелĕх колхоз пасарсенче сутма уйăрса хунă. Йулашкине колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе параççĕ. Çапла вара Молăтăв йачĕпе таракан колхоз пахча-çимĕçсенчен 50 пин тенкĕ тупăш илет.

Колхозра пахча-çимĕçсем тăвассипе пĕр бригадă ĕçлет. Вăл бригадăна Й. Семенăв колхозник йертсе пырать. Бригадă пахча-çимĕçсене çитĕнтерес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлерĕ.

Пахча-çимĕçсенчен пысăк тупăш илни колхозниксене ĕçкунĕсем тăрăх укçан ытларах валеçсе пама май парать. Колхоз кăçал кашни ĕçкунĕ пуçне 3-шер тенкĕ укçа валеçсе пама палăртнă. Хаљ аванс шучĕпе пĕрер тенкĕ валеçсе панă.

Колхозниксем тырпул илнисĕр пуçне укçан нумай илеççĕ. Т. Шиљдйаков колхозник çемйи кăçал укçан кăна 1500 тенкĕ илет.

Л. Семенăв.

Колхоза кĕреççĕ

Ишлей. Лапракасси йалĕнчи колхозниксемпе йединоличниксем хушшинче ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çессийĕ йышăннă саккунсене ăнлантарса парассине лайăх йеркеленĕ. Ку ĕçре комсомолĕцсем, агитатăрсем аван ĕçлеççĕ. Çавна май йединоличниксем колхоза кĕме тытăнчĕç. Çак иртнĕ кунсенче 8 йединоличник хуçалăхĕ 41 йедокпа колхоза кĕчĕç. Вĕсем хăйсен лашисене тата ытти хатĕрсене пĕрлештерсе, колхозниксемпе ĕçлеме тытăнчĕç.

Ив. Семенăв.

Ăмăртури малти вырăншăн

Харькăв облаçĕнчи Хотĕнски районĕнчи колхозниксем выљăхсене хĕл каçарма кăтартулăн хатĕрленме, выљăх-чĕрлĕхсем ĕрчетмели государствă планне ытлашшипех тултарма тата выљăхсен ăратлăхне лайăхлатма пĕтĕм колхозниксене чĕнсе каларĕç.

ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕпе çĕрĕç органĕсенче ĕçлекен работниксен профсоюзĕн Тĕп Комитечĕ Хотĕнски районĕнчи колхозниксен пуçаруне ырласа, выљăх-чĕрлĕх ĕçĕнче социалисăмлă ăмăртăва пуçарса йама йышăнчĕ. Çавăнпа пĕрлех выљăх-чĕрлĕх ĕрчетмели государствă планне кăтартулăн пурнăçланă, выљăхсен ăратлăхне лайăхлатас йенĕпе татăклă çитĕнӳсем тунă колхозсемпе районсене премисем пама палăртнă.

Выљăх-чĕрлĕх йенĕпе пыракан пĕтĕм союзри ăмăртура малти вырăна тухас тесен, çав ăмăртăва пур районсен, колхозсен те хутшăнса, выљăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пысăк çитĕнӳсем тăвассишĕн ăмăртса ĕçлемеле.

Выљăхсене хĕл каçарма кăтартулăн хатĕрленесси колхозсем, фермăсем умĕнче вирлĕн тăракан задач. Ку ĕçе халех тытăнас пулать. Выљăхсене усрамали витесене йусамала, шăтăк-çурăксене питĕрмеле, çĕнĕрен тума пуçланă витесене туса çитермеле.

Витесене ăшăтнипе епĕр выљăх-чĕрлĕхсен сывлăхне сыхлатпăр, апатсене перекетлеме пултаратпăр. Ăслăлăх опычĕсем кăтартса панă тăрăх, кашни пĕр градус сивĕ 3 процент таран выљăх апатне ытларах пĕтерет. Çавăнпа та ĕнтĕ кашни витене хĕл вăхăтĕнче ăша пулмала тăвасси—пайан тумали ĕç.

Выљăхсене лайăх хĕл каçарасси—апат кирлĕ чухлĕ хатĕрленинчен нумай килет. Выљăх апачĕсенчен пĕри вăл—çилос пулса тăрать. Çилос хывассипе пирĕн республикăри колхозсем йулса пыраççĕ. Кăна йалкорсен çырăвĕсем лайăх çирĕплетсе параççĕ. Хутарти (Çĕмĕрлĕ р.) Ленин йачĕпе тăракан колхозăн районсенчи йьйен планĕ тăрăх, 25 тоннă çилос хывса хăвармала пулсан, пайанхи куна пĕр тоннă та хывман. Анаткасри (Йетĕрне р.) „Октябĕр" колхоз та çилос хывма тытăнман. Кайри Карăкри (Трак р.) М. Калинин йачĕпе тăракан колхоз выљăхсене хĕл каçарма хатĕрленме тытăнман. Апатсем çителĕксĕр. Çилос пачах хывман. 15 лаша валљи вите çук.

Кашни фермăн Пĕтĕм Союзри ăмăртура малти вырăна тухассишĕн кĕрешĕве анлăн сарса пымала.

ССРС Çĕрĕç Халăх Комиссариатĕнче

Выљăхсене хĕл каçарма лайăх хатĕрленер

Нумай пулмасть, ССР Союзĕн Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Чувикăв йулташ „Колхозсенчи таварлă выљăх-чĕрлĕх фермисенчи тата колхозниксен выљăхĕсене 1938—39 çулта хĕл каçарма хатĕрлесси çинчен" приказ кăларнă.

Приказ районсенчи çĕрĕç пайĕсене зоотехниксенчен, ветеринари работникĕсенчен тата техник-строителсенчен комиççисем организацилеме хушать. Колхоз председателĕсемпе, фермăсен пуçлăхĕсемпе тата йалсоветсенчи выљăх-чĕрлĕх секцисен представителĕсемпе пĕрле çав комиççисем çентябĕр уйăхĕ хушшинче колхозсенчи выљăхсем валљи тунă мĕн пур постройкăсене пăхса тухмала, кирлĕ çĕрте текущи ремонт, оборудовани тăвассине тата вăл ĕçсене мĕнле срукĕсенче туса пĕтерессине палăртмала.

Çавăн пекех мĕн пур шывсене тата тарасасене пăхса тухмала, вĕсене йĕркене кĕртмеле, выљăхсене шăвармали шывăн пахалăхне тĕрĕслесе пăхмала, колхозсене шыв кӳрессине чи çăмăл майсемпе механизацилеме пулăшмала.

Районсенчи çĕрĕç пайĕсен комиççийĕсем колхозсен тĕрлĕ йышши выљăхсем валљи витесем çитнипе çитменнине лайăх пĕлсе тăмала. Выљăх-чĕрлĕх фермисенче пăрулакан ĕнесем валљи, çăварлакан сыснасем валљи, пăранлакан сурăхсем валљи, хăмлакан кĕсресем валљи, çавăн пекех тата тин çуралнă çамрăк выљăхсене усрама уйрăм витесем уйăрса парасси çине хытăрах пăхмала.

Мĕн пур выљăхсем валљи çителĕклĕ таран витесем хатĕрлесе парас шутпа Çĕрĕç Халăх Комиссариачĕ, октябĕр уйăхĕнчен кайа йулмасăр, колхозсен иртнĕ çулхи тата кăçалхи сметисем тăрăх выљăх витисем тумали строителствăна туса пĕтерме хушать.

Приказ çĕрĕç органĕсене вырăнсенче строителствă материалĕсене хатĕрлессине организацилеме хушать, крайсенчи тата облăçсенчи çĕрĕç пайĕсен начаљникĕсене выљăхсем валљи тăвакан витесен строителствине техникă йенчен пулăшасси çине хытă çаврăнса пăхма хушнă.

Çĕрĕç халăх комиссариачĕ Çĕрĕç органĕсене, МТС директăрĕсене тата колхозсен правленийĕсене утă тумали тата çилос хывмали плансене пурнăçа кĕртессипе татăклă мерăсем йышăнма хушать. Выљăх çимĕçĕн мĕн пур ресурсисемпе усă курмала: улăма, арпана пуçтарса хумала, вăрмансенче çулман уçланкăсенчи курăксене çулса илмеле, йĕкелсем тата çулçăлă туратсем хатĕрлессине организацилемеле, пахча-çимĕçсен аврисенчен çилос хумала. Выљăхсем айне сармашкăн торф, мăк, çулçăсем хатĕрлесе хумала.

Государствă умĕнчи хăйсен обйазатĕлствисене тултарса пĕтернĕ хыççăн, МТС-пе расчот тунă хыççăн, тата вăрлăх фончĕсем уйăрнă хыççăн, колхозсем хăйсен ферминчи выљăхсем валљи çулталăка çитмелĕх утă-улăм, сĕткенлĕ тата концентрацилĕ апатсем хатĕрлесе хумала,—çĕрĕç органĕсем çакăншăн ответлă пулаççĕ. Мĕн пур колхозсенче выљăхсене çулталăклăха кирлĕ апатран 10—15 процент уйăрса тĕкĕнмеле мар апат фончĕ тумала. Колхозниксен хăйсен килĕнчи выљăхсене те апатлă тăвассипе мерăсем йышăнмала.

Кĕрхи йĕпе-сапасем пуçланаччен, выљăхсене валљи хĕллене хатĕрленĕ утă-улăмран çурринчен кайа мар фермăсен çывăхне кӳрсе хумала. Ыттине—пирвайхи çуна çулĕпе куçарса хумала.

Фермăри выљăхсем валљи хĕл каçма уйăрнă апата тĕрĕс сыхласа усрассишĕн тата вĕсене тĕрĕс расхутлассишĕн ответлăха колхоз председателĕсем çине тата фермăсен пуçлăхĕсем çине хунă. Çĕрĕç органĕсен тата колхоз правленисен выљăх апатне мĕнле сыхласа усранине, ăна учот тăвассине тата ăна мĕнле расхутласа пынине йаланах контроль туса пымала.

Выљăх апачĕсемпе лайăхрах усă курас шутпа çĕрĕç органĕсем мĕн пур колхозсенче утă-улăма турасассипе, пасланатарса çитерессине, дрожжевани тăвассине тата ыт. организацилемеле.

Выљăхсене хĕл каçарма тăратас умĕн колхозсенчи мĕн пур выљăхсене выљăх тухтăрĕсене пăхтармала. Начар выљăхсене уйăрса илсе вĕсене лайăх апат çине тăратмала. Ырхан лашасене мĕн пур ĕçсенчен хăтарса лайăхрах çитерме пуçламала.

Выљăхсене хĕл каçарма хатĕрленес ĕçе—выљăх-чĕрлĕх ĕçĕнче социалисăмлă ăмăртăва çĕнĕрен çĕклентерсе йарас тата стаханăвла йухăма малала сарса пырас палăсемпе, Пĕтĕм Союзри йалхуçалăх выстăвкине хутшăнма права илес паллăсемпе туса пымала.

Амуртри хĕрлĕ йалавлă çар флочĕ.

ӲКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: лейтенант-орденоносĕц Н. К. Лозовой краснофлотецсене 1929 çулта Сунгари йуханшывĕ çинче пулнă çапăçу çинчен каласа парать.

С. Образцов фото-ӳкерчĕкĕ (Союзфото).

Канаш—Шупашкар чукунçул строителствинчи стаханăвла çирĕмкунлăх

Алекçейĕв тата унăн бригади

Иван Алекçеич 18 çулта чухнех платник пулса ĕçлеме пуçланă. Халĕ вăл 59 çулта. Çак 40 çул хушшинче, хăй каланă тăрăх, Иван Алекçеич 212 пурăнмали çурт, 19 шкул тунă. Кĕперсем, сарайсем тата ытти пĕчĕкрех ĕçсене мĕн чухлĕ туннне астăваймасть.

Иртнĕ çултанпа Иван Алекçеич Канашпа Шупашкар хушшинчи чукунçул строителствинче ĕçлет. Пур йенчен те ĕçре лайăх ĕçленĕрен, малтанхи кунсенчех ăна бригадира суйланă. Унăн 10 çынтан тăракан бригади йалан паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçленĕ. Срукченех 4 пысăк кĕпер туса пĕтернĕ.

Хаљхи вăхăтра Иван Алекçеич йертсе пыракан бригадă вокзал урайне сарса, тăррине витет. Ĕç пысăк хăвăртлăхпа пырать. Бригадăра 10 çын çеç пулин те, вĕсем 15 çын тумали ĕçе туса пыраççĕ, кашни кунах плана 130—160 процентшар тултараççĕ.

Бригадă лайăх ĕçлени чăн малтанах бригадиртан килет. Иван Алекçеич хăйĕн 40 çулхи ĕç опытне ытти рабочисем хушшине сарать, çамрăк платниксене вĕрентет. Кашни члена уйрăм ĕç валеçсе панă. Çапла туни ĕçри чăрмавсене сирет. Дисциплинă та çирĕп. Ĕçе кайа йулса тухакансем, йе ĕçрен пăрăнса çӳрекенсем çук. Пурте пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлеççĕ. Уйрăмăнах бригадăра 56 çулхи платник Ваçили Гордейĕв, Алекçей Макçимăв, Федăр Куçмин, Осип Йегорăв йулташсем йалан пысăк тухăçлăхпа ĕçлесе пример кăтартаççĕ.

Бригадă август уйăх планне 138 процент тултарнă. Халĕ бригада членĕсем пурте стаханăвла çирĕмкунлăха хутшăнса ку уйăхри плана 150 процентран кайа мар тултарма обйазатĕлствă илчĕ. Паллах, панă сăмаха пурнăçлаççĕ вĕсем.

Бригадир Иван Алекçеич ĕç анса пынăшăн хăй те савăнать.

Иртнĕ çулта Иван Алекçеичăн пысăк ĕçне хакласа, ăна „Почетный железнодорожник" значокпа парнеленĕ. Преми шучĕпех Крыма кайса канса килнĕ, коçтюм илнĕ. Çак кунсенче, вокзал туса пĕтерсен, Ленинград хулине курса çӳреме кайать.

Х. Л.

Çĕрпӳ станцийĕ.

Йалава алăран вĕçертместпĕр

Пирĕн бригадă лини сарнă чухне паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлесе куçса çӳрекен хĕрлĕ йалава илме тивĕçлĕ пулчĕ.

Епĕр малашне те ку йалава çирĕп тытса тăратпăр. Вăл пире татах та хастарлăрах ĕçлеме чĕнет.

Пирĕн бригадă виççĕмĕш участкăри комсомолĕцсен бригадипе ăмăртса ĕçлет. Догăвăрта кăтартнă тăрăх куллен плана 150 процентран кайа мар тултармала. Кăна епĕр ытлашшипех пурнăçлатпăр. Çентяберĕн 13 мĕшĕнче плана 165 процент, 14-мĕшĕнче—168 процент тултартăмăр.

Бригадă членĕсем татах та лайăхрах ĕçлеме пултараççĕ. Ĕç хатĕрĕсем çителĕксĕр: 6 лом, подкладкăсем çитмеççĕ.

Р. Йемељйанăв.

Шупашкар станцинчи Колбасăв бригадинче ĕçлекен.

Колхозсем ĕç вăйĕ параççĕ

ШĂХАÇАН. Районри колхозсем чукунçул строителствинче стаханăвла çирĕмкунлăх иртересси çинчен Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе ПСК(б)П Обком бюровĕ йышăннине пысăк хастарлăхпа сутсе-йавса, строителствăна ĕçлеме кайаççĕ. Хаљхи вăхăтра Маťшу колхозĕнчен 20 çын, Шĕкĕр йалсоветĕнчи колхозсенчен 34 çын чукунçул строителствинче ĕçлеççĕ. Çентяберĕн 7-мĕшĕнче Маťшури комсомолĕцсем 16 çын ĕçлеме кайрĕç. Ытти колхозсенчи комсомолĕцсем те чукунçул строителствинче тăрăшса ĕçлеççĕ.

Дм. Иванов.

14,5 кубла метр çĕр чаваççĕ

ÇĔРПӲ. „Ĕмĕт" колхозран чукунçул строителствинче 21 çын ĕçлет. Пурте вĕсем стаханăвла çирĕмкунлăха хутшăннă. Пĕр пĕрин хушшинче ăмăрту саралсах пырать. Иилашки кунсенче П. Никитин, П. Иљйин, П. Андрейĕв йулташсем çĕр чавассипе çĕнĕ ӳсĕмсем турĕç. Вĕсем виççĕшĕ те куллен 14,5 кубла метр чавса, плана 150 процентшар тултарса ĕçлеççĕ.

„Ĕмĕт" колхозран пынă бригадă „Пионер" колхозпа ăмăртăва тухнă.

В. Дмитрийĕв.

Тата лайăхрах ĕçлемеле

„Кочаковĕц" (Шупашкăр р.) колхозран килнĕ комсомолĕцсен бригади (бригадирĕ Йакăвлĕв йулташ) Шупашкар станцинче вокзал тунă çĕрте ĕçлет. Бригадăра 5 çын. Вĕсенчен 4 комсомолĕц. Бригадă кулленхи ĕç нормине ытлашшипех тултарса ĕçлет. Стаханăвла çирĕмкунлăхăн малтанхи кунĕсенче тăпра чавса купалас ĕçре бригадă плана 150 процент таран тултарса пычĕ. Малашне бригадă членĕсем нормăна 200 процент тултарса пымала тăвасшăн тăрăшаççĕ.

А. Семенăв.

Строителствăра ĕçлеме 50 çын уйăрчĕç

Маťшури „Çамрăк колхозник" колхоз членĕсем (Шăхасан р-нĕ) чукунçул строителствине ĕçлеме хавасланса кайаççĕ. Хаљхи вăхăтра строителствăра 50 çын ĕçлеççĕ. Вăл шутран комсомолĕцсем 10 çын. Вĕсем 100 кубла метр тăпра турттарнă. Ĕçре М. Маркелăв, Й. Андрейĕв тата комсомолĕц К. Андрейĕв йулташсем лайăх пример кăтартаççĕ.

Ник. Йакăвлĕв.

Кино валљи сценарисене халăх çырать

(Киносценарисен конкурсĕ)

Киносценарисен конкурсĕ пуласси çинчен пĕлтернĕ кунранпа виçĕ уйăх иртрĕ. Вулакансене конкурс условийĕ содержанийĕ çинчен тепĕр хут кĕскен астутаратпăр. Вăл икĕ пайа уйăралать—вăрттăн тата уçă конкурс. Пĕрремĕшĕ—професçионаллă драматургсем, писателсем тата сценарисем валљи Кинематографи ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ йатарласа панă заказсем тăрăх çырмали, иккĕмĕшĕ—Совет Союзĕнчи киносценари çырас текен мĕн пур граждăнсем валљи. Вăрттăн конкурс тăрăх сценарисене: Й. М. Свердлăв, М. В. Фрунзе, Ф. Е. Дзержинский, С. М. Кирăв, В. В. Куйбышĕв, Серго Орджоникидзе тата С. Т. Шаумйан темăсемпе çырмала. Уçă конкурсăн тĕп темисем çаксем пулаççĕ: оборона, фашисăма хирĕç, пĕтĕм тĕнчери фашисăмăн агĕнчĕсемпе кĕрешни, стаханăвла йухăм, халăхсен туслăхĕ, хĕрарăм, çемйе çинчен т. ыт. те.

Конкурс çинчен хаçатсенче йюнĕн 16-мĕшĕнче пичетленĕ, тепĕр кунах Кинематографи ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитетне малтанхи мăтуевсем сĕнӳсем пыма пуçланă. Халĕ Кинематографи ĕçĕсен Пĕтĕм Союзри Комитечĕ çумĕнче тунă конкурс çектăрĕнче аслă тăван çĕршывăн мĕн пур кĕтесĕсенчен—Камчаткăран, Нагайĕвă бухтинчен, Узбекистанран, Казахстанран, Уралтан, Кавказран, инçетри колхозсенчен пынă çырусем 1200 ытла пухăннă.

Вăл çырусем пит те тарăннăн хумхантаракан вăйăн документсем.

Професçăрпа колхозник, врачпа рабочи, педагогпа љотчик, академикпа красноармейĕц, студент, шахтăр, чукунçул рабочийĕ—акă кăмсем конкурс валљи киносценарисем çыраççĕ. Çав вăхăтрах халăхсен пысăк масси, конкурсра хутшăнмасăрах, конкурса хăйĕн канашĕсемпе, сĕнĕвĕсемпе тата кăтартăвĕсемпе пулăшать.

— Епĕ сценари çырма пултараймастăп,—тесе çырать Шуйскри арлакан хапрăкри рабочи К. Б.,—çапах та епĕ сюжет парас тетĕп.

— Тĕнпе чиркĕве хирĕç çапăкан сăмахна çивĕчрех хăйрас тесен,—тесе çырать Ленинградран П. Барыкин,—чи малтан тăшманăн чиркӳри ĕçне тĕплĕн сăнаса вĕренмеле. „Чяркӳ—тăшман ĕçĕн вучахĕ" темăна кĕртме сĕнетĕп.

Лейтенант Б. сценари схемине Хĕрлĕ Çар геройĕ мĕнле туптанни, çамрăксем Рабочисемпе Хресченсен Хĕрлĕ Çарне мĕнле пыни тата лейтенант Б. хăй каланă пек, воспитани шкулĕнчен вăрăм срукла отпуска мĕнле кайни темăсем кĕртме сĕнет.

Пĕр корреспондент Верховнăй Совĕтăн çамрăк депутачĕ темăпа сценари çырни çинчен пĕлтерет, теприне халăх учителĕ темă çаврса илнĕ, виççĕмĕш фашисcем советăн „Комсомол" теплоходне путарнă материалпа ĕçлет. Инçет Хĕвелтухăçĕнчи командир арăмĕ Инçет Хĕвелтухăçне культурăлатас тĕлĕшпе хетагуравла массăлă йухăма пуçарса йаракан Хетагурăвă комсомолкăн пурнăçĕ темăпа çырма тытăнать.

Б. тата П. студентсем икĕ темă: „Игорь полкĕ çинчен хывнă сăмах" тата „Студентсем" шухăшласа хунă.

„Пĕрремĕш темăна илсе,—тесе çыраççĕ сценарисен пулас авторĕсем,—епĕр хăйĕн мĕн пур истори çулĕ тăрăхĕнче хăйĕн тăван çĕршывне йуратнă тата ăна тăшмансем тапăнниничен паттăрла сыхланă аслă вырăс халăхне кăтартасшăн".

Украинăри пĕр шкул преподавателĕ тахçантанпах фољклорла материалсем пухассипе ĕçлет. Вăл ку тăринччен 2500 йурă, 1300 ваттисем каланă сăмах, 475 шухăшласа тупмали йумах, 350 ытла йумах тата ыт. те пухнă.

Вăл преподавател ĕçлекен йал пуйан историлĕ. Октябĕр революци пуличчен кунта хресченсем пăлхавĕсем пулнă. Кунти хресченсене патша влаçĕ тискеррĕн хĕнесе асаплантарнă. Учител ку темăпа фољклорлă пуйан материалпа усă курса повĕç çырнă. Хăйĕн произведенине вăл конкурса йарать.

Конкурс çектăрĕ çак кунсенче çакăн пек çыру илнĕ: „Епĕ конкурс çинчен пĕлсен пит те савăнтăм. Ку чаплă та усăлă пуçару кинематографи искусствипе çыхăнман çынсене хăйсен пултарулăхне палăртма май панипе тата ытларах усăлă пулать. Епĕ çавăн пеккисен хисепĕнче тăратăп. Манăн пуçра тахçантанпах пĕр интереслă темă пур, анчах пĕлӳпе опыт çитменни çеç мана сценари формине тума чăрмантарать. Епĕ советăн пĕр гражданинне кăтартасшăн. Вăл гражданин тăван çĕршывăн оборона пултарулăхне тĕреклетес тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлет. Ăна халăх тăшманĕсем тĕрлĕ чейелĕхпе аскатарса хăйсен йенне çаврма пултарнă. Кунпа пĕрлех епĕ тăшмансен ĕçĕн метăдне анлăн кăтартса пама шухăшлатăп. Йулашкинчен епĕ вăл произведенире тăшмансен ирсĕр ăнĕвне вăйпах ăавăçтарнă çынна хăйĕн айăпне йышăнмали тата ăусамали çул уçса пама шухăшлатăп. Мана ку ĕçре пулăшма мăтатăп."

Çавăн пек творчĕствăлă пулăшу ыйтса çырнă çырусем пит те нумай. Палăртса хăвармала, Мускавра вăл пулăшăва начар мар лартнă. Комитет çуртĕнче—М. Гнездниск переулăкĕнче конкурсра хутшăнакансем кашнийĕх тĕплĕ тата авторитетлă консуљтаци илеççĕ. Кинематографи Институтĕнче итлекенсем валљи сценари сюжетне йĕркелессипе лекцисем организациленĕ. Вăл лекцисенче чи лайăх кинокритиксемпе режисçорсем советăн вăлăн саралнă кинофиљмĕсене пăхса тухаççĕ.

Сценарисене тăратмали йулашки кун уçă конкурс тăрăх 1938 çулти нойаберĕн 1-мĕшĕ, вăрттăн конкурс тăрăх 1939 çулти йанварĕн 1-мĕшĕ пулать. Уçă конкурса ку таринчен 400 ытла сценари пынă. Темăсем çурри ытла халăх тăшманĕсемпе пыракан кĕрешӳ çинчен. Ку вăл совет халăхĕ Ленин—Сталин партине, тăван çĕршыва чĕререн йуратнине, халăх тăшманĕсене, фашиссен агĕнчĕсене—троцкисла бухаринла шпионсене, диверсантсене, сыввĕлерсене курайманнине çĕнĕрен пит те уççăн кăтартать. Темăсем граждăн вăрçи, советла йăла, стаханăвçсем, халăхсен туслăхĕ, йурату, çемйе çинчен пур. Анчах ун пек сценарисем пит те сахал. Конкурс çектăрĕнче çакна та палăртаççĕ: илнĕ сценарисенче комсомол 20 çул тултарнă май комсомол тематикине начар кăтартнă. Ачасем çинчен аслă шкулта вĕренекенсем çинчен темăсем пачах сахал илнĕ. Нацилĕ тематикă пачах начар вара.

Конкурс пĕтес срук çывхарнă май сценарисем нумай пыма пуçланă, çав вăхăтрах çырусемпе ыйтусем сахал пыма пуçланă. Малтанхи вăхăтра Комитет пĕр кунта 50—60 çыру тата 2—3 сценари илнĕ. Халĕ йăлтах урăхла, почта кашни кун 4—5 çыру çеç илсе пырать, ун вырăнне сценарисем 18—20 пыраççĕ.

Конкурса пыракан мĕн пур сценарисене малтан литконсуљтантсем пăхса тухаççĕ, унтан жюри членĕсем патне йараççĕ. Жюри составĕ пит те авторитетлă. Унта А. Толстой, А. Çерафимович, П. Павленко, К. Тренĕв писателĕсем, С. Ваçилйĕв, Довженко, Ромм, Чиуарели, кинорежисçорсем, професçăр Шестаков, Йем. Йарославский кĕнĕ.

Вăрттăн конкурса совет писателĕсене 30 ытла йавăçтарнă. Вĕсем Свердлăв, Фрунзе, Дзержинский, Кирăв, Куйбышĕв, Серго Орджоникидзе тата Шаумйан çинчен сценарисем çыраççĕ. Вăл писателсем хушшинче А. Толстой, Фадейĕв, Федин, Панферăв, Погодин, Пабел, Леонăв, Л. Соболĕв, Павленко, Тихăнăв, Форш, Шкловский т. ыт. те.

Конкурс резуљтачĕсене пĕтĕм çĕршыв кĕтет.

(ТАСС).

Тинĕссемпе йуханшывсен тĕпĕнче

Совет тинĕсĕсемпе йуханшывĕсенче водолазсем путнă пăрахутсене шыв тĕпĕнчен кăлараççĕ, фарватăрсене тасатаççĕ, тахçан путнă карапсене шыраççĕ. Шыв тĕпĕнчи ĕçсене тăвакан Хĕрлĕ йалавлă експедици (Эпрон) начаљникĕ 2-мĕш рангри флагман, орденоносĕц Ф. И. Крылов йулташ халљхи вăхăтра епроновĕцсем мĕскер ĕçлеви çинчен çапла пĕлтернĕ:

— Халљхи вăхăтра пирĕн партисенчен пĕри,—тенĕ Крылов йулташ,—Саратăври затонра, Атăлта, „Сталинец" йатлă пăрахута шыв тĕпĕнчен хăпартас тĕлĕшпе ĕçлет. Çывăх вăхăтсенче ăна хăпартса çитереççĕ ĕнтĕ. Астрăхаљри арватĕрте тахçан пĕрре док путнă пулнă. Пăрахутсене çÿреме чăрмантарнă çав дока халĕ водолазсем шывран кăлараççĕ.

Граждан вăрçи вăхăтĕнче шургвардейĕцсем Сарапуљ патĕнчи Камă шывĕ çинчи кĕпере сиктерсе çĕмĕрнĕ пулнă. Кĕпер фермисем темиçе çулсем хушши ĕнтĕ пăрахутсене çÿреме чăрмантараççĕ. Епронăвĕцсем халĕ Камăна шыв айне пулнă фермăсенчен тасатаççĕ.

„Политотделец" йатлă гидрографилĕ пăрахута шторм иртнĕ çулта Баренцăвă тинĕсри Колгуйĕв утравĕн çыранĕ çине кăларса пăрахнă пулнă. Халљхи вăхăтра епронăвĕцсем çав Арктикă шывĕсем тăрăх ишекенсемшĕн хаклă пăрахута çăлса хăварас йенĕпе çине тăрсах ĕçлеççĕ.

Инçет-Хĕвелтухăç районĕнчи Амур шывĕнче питĕ пысăк баржă путнă пулнă. Халљ Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи водолазсем баржă корпусне тĕрĕслесе тухнă, шыв кĕрекен шăтăксем çине саплăксем лартнă. Çывăх вăхăтсенче баржăна çĕклесе хăпартаççĕ.

Анчах та епронăвĕцсем пĕлсе тăракан вырăнсенче путнă суднăсене шыв тĕпĕнчен çĕклесе хăпартассипе çеç мар ĕçлеççĕ. Халљ пирĕн експедицисем темиçе çул кайала Балти тата Шурă тинĕссенче путнă суднăсене—„Донец" йатлă пăрахута тата 9-мĕш №-лĕ пăрçĕмрене вĕсем путнă тинĕссенче шыраççĕ.

Ленинградра Нева шывĕнче тĕпчев ĕçĕсене туса ирттереççĕ. Водолазсем кунта шыв айĕнче çутса çÿремели çĕнĕ лампăсене сăнаççĕ. Сăнавсене Неван пăтранчăк шывлă вырăнĕсенче тăваççĕ. Лампă çути водолазсен ĕçне çăмăллатать.

Епрон шыв тĕпĕнчен çĕклесе хăпартнă суднăсенчен мĕнлисем çитес çывăх вăхăтра ĕçе кĕрсе ишме пуçласси çинчен Крылов йултăш çапла каланă:

— Кăçалхи çул ишеве хĕрлĕ йалавлă „Сибирйаков" йатлă чаплă пăрçĕмрен кайать пулмала. Епрон ăна пĕлтĕр Çĕнĕ Çĕр çыранĕсем патĕнче çăлса хăварнă пулнă. Халљхи вăхăтра „Сибирйаков" пăрçĕмрене Архангĕлскра йусаççĕ.

„Мысхако" совхоз (Новороссийск) кăçал гектартан 110 центнĕр виноград пухса илет.
ÿКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Стахановкă Полљă Полтавĕц виноград пухать.
В. Соловйов фото-ÿкерчĕкĕ (Сойузфото).

Вакунсем йусакан савăтри хор

Канашри вакунсем йусакан савăтри чăваш хорне 1935 çулта организациленĕ. Хор рабочисемпе колхозниксем хушшинче пысăк авторитетпа усă курать. Хора Шупашкарти музыкă училищинчен вĕренсе тухнă А. Нечайĕв йулташ йертсе пырать. Унта савăтри 48 рабочи тăрать, вĕсем хушшинче РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Е. Антонăвă йулташ та пур.

1936—37 çулсенче савăтри рабочисем хушшинче çеç концертсем панă. Сăмахран, 1937 çулта хор кружокĕ 27 концерт панă.

Хор уйрăмах кăçал пысăк çитĕнÿсем тунине палăртмала. Савăтри рабочисем хушшинче ĕçленипе пĕрлех, кăçал ийуљ тата август уйăхĕсенче пулса иртнĕ икĕ олимпиадăра хор хăйĕн пултарулăхне кăтартрĕ. Хусан чукунçулĕн политуправленийĕ организациленĕ олимпиадăра Хусанта вакунсем йусакан савăт хорĕ иккĕмĕш вырăна тухса 3.000 тенкĕ преми илчĕ.

Кăçал октăбĕр уйăхĕнче Мускавра чукунçул çинче ĕçлекенсен Пĕтĕм Сойузри олимпиади пулать. Халљхи вăхăтра хор çав олимпиадăна кайма хĕрсех хатĕрленет.

Кунсăр пуçне вакунсем йусакан савăтра стрелковăй охранă çумĕнче арçынсен хор ансамблĕ пур, унта 15 çын тăрать. Ансамбљ кăçал чылай çитĕнÿсем турĕ.

Анчах хор ĕçĕнче чылай çитменлĕхсем пур-ха, вăл çитменлĕхсем хора художĕствă йенчен ÿсме чăрмантарса тăраççĕ. Кунсерен занљатисем туса ирттерме уйăрса панă пÿлĕм çав тери тăвăр пирки, унта хориссем шăнăçаймаççĕ. Завком председателĕ Петров хор ĕçĕпе интересленмест, праçниксем çывхарса килнĕ чухне çеç хыпăнса ÿкет: мĕншĕн концерт çук, мĕншĕн çĕнĕ номĕрçем çук,—тесе шавлама пуçлать. Ытти вăхăтра хор çинчен пачах манса кайать. Ку та сахал-ха, халиччен пулса иртнĕ тата малашне пулмали олимпиадăсем çине те Петров çийелтен çеç пăхать. Хорта йурлакан—РСФСР Верховнăй Совет депутачĕ Е. Антонăвă йултăш ун çинчен акă мĕн çырать:

„Чукунçул çинче ĕçлекенсен олимпиадине пире те хутшăнтарни çинчен пĕлсен, епĕр питĕ савăнтăмăр. Анчах Петров пире ытла хавасланмах памарĕ. Вăл хора пĕтĕм составĕпех олимпиадăна хутшăнмала тума тăрăшмарĕ. Май пур çĕртех ĕçрек хăтарман пирки чи лайăх хориссем; Çеменăв, Волкăв, Макарăвă, Адйакинă т. ыт. те олимпиадăна пыраймарĕç".

Ку çеç мар-ха. Иртнĕ хĕлле клуб çумĕнче вырăссемпе чăвашсен драмă кружокĕсем ĕçлеччĕç, халĕ вĕсем саланса кайнă. Ĕçлеме услови туса паман пирки тата материаллă пулăшу паман пирки духовой оркестр руководителĕ Минейĕв та ĕçлеме пăрахрĕ. 1935 çулта туйаннă домрăсемпе балалайкă оркестрĕ таçта çухалчĕ.

Вакунсем йусакан савăтри çамрăксем хушшинче талантлă çынсем пур, вĕсем тĕрлĕрен музыкă инструменчĕсем çинче выљасшăн, йурласшăн çунаççĕ. Вĕсене тĕрлĕрен художĕствăлă пултарулăх кружокĕсене йавăçтарма пулать.

Завком художĕствăлă пултарулăх ĕçне хакламан пирки пĕтĕм ĕç чарăнса тăрать.

Ф. Ландышĕв.

Совет çĕршывĕ çинчен 40 фиљм

1939 çулта Њйу-Йоркра усăлмали пĕтĕм тĕнчери выставкă валљи „Сойузкинохроникă" студийĕсенче 40 ытла хроникăлă-документлă фиљмсем ÿкереççĕ. Кĕске метражлă картинăсем йут çĕршывсенчи халăхсене Совет Сойузĕн пуйанлăхĕсене, пирĕн тăван çĕршывăн вăйĕпе хăватне кăтартса парĕç.

Çав фиљмсене тăвас тĕлĕшпе тĕп ĕçсем „Сойузкинохроникăн" Мускаври студинче сарăлса пыраççĕ, мĕн пур картинăсенчен çуррине ытла унта ÿкереççĕ. Çĕнĕ Мускава, Мускав—Атăл каналне, Хĕрлĕ Çарăн тата Тинĕс-Çар Флочĕн пурнăçĕпе йăлисене кăтартакан фиљмсен хăшпĕр кадрĕсене ÿкернĕ те ĕнтĕ. Папанинăн геройла епопейа, Çурçĕр полљусне çĕнтерни, Громав, Чкалăв, Коккинаки йултăшсен вĕçевĕсем—пурте вĕсем кинодокументсене кĕреççĕ. Пĕтĕм халăхăн праçникĕ пулнă—ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйламалли куна кăтартса паракан фиљма уйрăм вырăн парса ÿкереççĕ. Њйу-Йоркри выставкăна кĕрсе куракансем аслă Сталинла Конституцине, совет çыннисен никам пăсма пултарайман прависене кăтартакан кадрсене те курĕç.

Хроникăлă кинофиљмсене „Сойузкинохроникăн" Ленинградри, Новоçибирскри, Саратăври, Бакури, Ашхабадри тата ытти хуласенчи студисенче те ÿкереççĕ. Новоçибирскри студи ылттăн прискисен çинчен фиљм хатĕрлет, Бакури студи—нефть кăларни çинчен, Ростоври студи—Кубањри колхозниксен пуйан пурнăçне кăтартакан фиљм ÿкерет. Епроновĕцсен тавативĕçлĕ ĕçĕсем çинчен, ССР Сойузĕнчи физкуљтурă йухăмĕ тата телейлĕ ачасем çинчен киноÿкерчĕк пулать.

Çÿлте асăннă мĕн пур картинăсене Англи чĕлхипе кăлараççĕ. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем тĕрлĕрен краскăсемпе ÿкернĕ фиљмсем пулаççĕ.

„ССРС кубокне" „Спартак" футболисĕсене панă

„ССРС кубокне" выљаса илес вăйăйа Совет Сойузĕнчи тĕрлĕрен ирĕклĕ спорт обшчĕствисенчен 296 футбол команди хутшăннă. „Кубокăн" хĕрхенÿсĕр саккунĕ тăрăх, выљаса илмен командăн вăйăра малала хутшăнса выљама прави пĕтет. Çентăбĕрĕн 14-мĕшĕнче Мускавра, „Динамо" стадионĕнче финаллă матч пулса иртнĕ. „Електрик" (Ленинград) команди „Спартак" командипе (Мускав) тĕл пулса выљанă, вĕсем хăйсен противникĕсенчен пур матчсене выљаса илнĕ.

75 пин çын курма пынă матч москвичсем 3 : 2 шутпа çĕнтернипе пĕтнĕ.

Матч пĕтнĕ хыççăн, „Спартак" командине футболăн хисеплĕ призне—„ССРС кубокне" чыслăн панă.

(ТАСС).

Çĕмĕрлере кулинари ĕçне хакламаççĕ

Ĕлĕк столовăй ĕçне вĕрентекен шкулсем пулман. Ун чухне „апат-çимĕç пĕçересси хĕрарăм ĕçĕ, апат вут хурсан пиçет",—тенĕ. Халĕ пĕтĕмпех урăхла. Мускав, Ленинград т. ыт. хуласенче кашни çулах маçтăр-повăрсем, кулинарсем нумай вĕрентсе хатĕрлеççĕ. Столовăй ĕçне лайăх пĕлекен повăрсем вĕрентсе хатĕрлеме условисем çителĕклĕ.

Çĕмĕрле хулинчи „Опит" столовăйĕнче 10 повăр шутланать. Анчах та вĕсенчен пĕри те столовăй ĕçне вĕренмен. Шилинпа Карасйĕв повăрсем хăйсен ĕç стажĕ çине шанса: „епĕр ал пусма пĕлетпĕр, апачĕ вутă хурсан пиçет",—теççĕ. Кунти повăрсем кулинари ĕçне вĕренме, хăйсен пĕлĕвĕсене ÿстерме тăрăшмаççĕ.

Ку столовăйĕнче ĕç укçине ĕçленĕ тăрăх памаççĕ. Башкирăвă повăрта 8 çул ĕçлет. Ĕçе лайăх вĕренсе çитнĕ. Апла пулин те Башкирăвăна ĕç укçи сахал тÿлеççĕ.

Çĕмĕрлери суту-илÿ пайĕн правлени председателĕ Шишкин йулташ столовăй заведуйушчийĕпе—Ивановăпа повăрсем хушшинче çемйелĕх пуррине курмасть. Рабочисем столовăйри çитменлĕхсем çинче кăтартса час-часах жалăбăсем параççĕ, анчах вĕсене пăхакан çук.

Шилина кухњă ĕçне пĕлменшĕн иртнĕ çулта ĕçрен кăларнăччĕ. Растрата тунăшăн сут туса айăпланă пулнă. Анчах столовăй заведуйушчийĕ Иванова Шилин ĕçне тĕрĕслесе пăхмасăрах кухњăна ĕçе илнĕ. Кухњă пуçлăхĕ тесе уйăхне 350 тенкĕ тÿлеççĕ.

Çак çитменлĕхсене пула Çĕмĕрлери столовăйсенче апат-çимĕç пахалăхĕ те начарлансах пырать.

Ресторанти жалăбă кĕнеки çинче 60—70 жалăбă шутланать. Вĕсенчен пĕрине те тĕплĕн пăхса тухман, кашни жалăбă çинех 2—3 сăмахпа: „будет предупрежден",—тесе çырса хунă. Çитменлĕхсене тÿрлетме тăрăшмаççĕ. Апат-çимĕç хаклă. Буфетра пулă, котлетсем, сивĕ закускăсем, торт, бисквитсем пачах та пулман. Менÿ çинче кашни кунах пĕр тĕслĕ апат. Шилин апат-çимĕçсен пахалăхне лайăхлатма тата блљудăсен шутне нумайлатма тăрăшмасть.

С. Николайĕв, П. Љвов, И. Асчан.

Пуйан колхоз

ТУРХАН. „Смычкă" колхоз çулсеренех ÿссе, тĕрекленсе пырать. Кăçал тырпулсене никамран малтан пуçтарса кĕртрĕ, государствăна тырă парса районра пĕррĕмĕш квитанци илчĕ. Кăçал колхоз електростанци лартать, вăл Малинăвкăри Калинин йачĕпе тăракан колхоза та çутă парса тăмала. Октăбĕрти Социалисăмлă Аслă револљуци 21 çул тултарнă тĕле електростанци ĕçлеме пуçлать. Двигатĕлсене хатĕрлесе çитернĕ, çав двигатĕлпех октăбĕр уйăхĕнче колхозăн вутлă арманĕ ĕçлеме тытăнать. Колхозра радиоузĕл пур, нумайĕш колхозниксем килтех радио итлеççĕ.

Çак кунсенче колхоз 100 ача валљи çĕнĕ шкул туса пĕтерет.

Кăçал „Смычкă" колхоз кашни ĕçкунĕ пуçне 3 килограм тĕштырă тата 1 тенкĕ те 80 пус укçа валеççе парать. Çапла Степан Владимирăв çемйи кăçал 200 пăт ытла тĕштырă тата 1805 тенкĕ укçа илет; Павел Николайĕв колхозник çемйи 673 ĕçкунĕ тунă, вăл 126 пăт тырă, 1077 тенкĕ укçа илет т. ыт. те.

Ив. Архипăв.

Килхуçи хĕрарăмсем çар ĕçне вĕренеççĕ

ÇĔРПУ. Хулари килхуçи хĕрарăмсем районри библиотека çумĕнче çар ĕçне вĕренмели кружок организацилерĕç. Кружокра 24 хĕрарăм тăрать. Малтанхи занљатисенче тĕнчери лару-тăру çинчен, вăрçă хăрушлăхĕ пысăкланса пыни çинчен лекци иглерĕç. Халљхи вăхăтра винтовкă пайĕсене тата ПВХО значокĕн нормисене пама вĕренеççĕ.

Кружокра ку таринчен 5 занљати пулса иртрĕ. Активисткă-килхуçи хĕрарăмсем—Сысинă тата Антонăвă йулташсем занљатисене пĕр сиктермесĕр çÿреççĕ, отличнă вĕренеççĕ. Библиотекă кружок валљи кирлĕ литературăсем çителĕклĕ тупса панă.

К. Михайлăв.

Çезон уçăлчĕ

Çĕпрел. районĕнчи (Тутар республикĕ) колхоз театрĕ 1938—39 çулти çезона çентăбĕрĕн 1-мĕшĕнче „Маçăн анне" йатлă пйесăпа уçрĕ. Пйесăн тĕп шухăшĕ—совет патриотисăмĕ, пирĕн çамрăксем тăван çĕршыва чунтан-чĕререн йуратни, уншăн мĕн пур пурнăçа пама хатĕр тăни. Тĕп рољсене Иакăвлĕв, Никитин, Куçмина, Михайлăвă, Павлăв артиссем выљаççĕ.

Халљхи вăхăтра акторсен коллективĕ „Айдар" драмăна лартса пама хатĕрленет. Айдар рољне выљама Н. Н. Никитин артиса хушнă.

Çак çитес кунсенчех театр Аксу, Тељмăн тата Октăбĕр районĕсенчи колхозсене тухса кайать.

Маринă Арефйĕвă.

Ăмăртура стахановĕцсем ÿсеççĕ

Шупашкарти „Крестьянин" савăтри рабочисем кăçалхи çул пуçламĕшĕнчех социалисăмлă ăмăртăва хутшăнса обйазатĕлствăсем илнĕ. Вĕсем хăйсен обйазатĕлствисене лайăх пурнăçласа пыраççĕ. Укладчиксем: Н. Йермаков, М. Антонăв, П. Лукойанăв йулташсем нормăна кашни 150—160 процентшар тултараççĕ. Савăтра пилĕк çул хушши пĕр прогул тумасăр ĕçлекен стахановкăсем: Йе. Васйлйĕвă, И. Ксенофонтăвă йулташсем йулашки уйăхсенче нормăна 180 процентшар тултарма пуçларĕç. Васйлйĕвă йулташ нумайах та пулмасть Крыма кайса канса килчĕ, халĕ вăл куллехи ĕç нормине 250 процент тултарма пулчĕ. Мирољубимăв, Жирнов йулташсем йертсе пыракан бригадăсем те плана 140—150 процентшар тултараççĕ.

Рабочисем лайăх ĕçлесе пыни пĕтĕмпех вĕсене ĕçлеме майсем туса панинчен килет. Кулљтмассăлă ĕçе йĕркеленĕ. Кашни уйăхра пĕрре çтена хаçачĕ тухса тăрать, 21 екземпљар тĕрлĕрен хаçат-журналсем килсе тăраççĕ. Кулљтработник М. Сидăрăв йулташ час-часах рабочисене çĕнĕ хыпарсем çинчен каласа кăтартать.

Çапла ĕçлесе пынипе те ĕнтĕ савăт 8 уйăх планне 118 процент тултарнă. Халĕ рабочисем социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма татах та вăйлатса, çулталăк планне срукчен тултарассишĕн тăрăшаççĕ.

С. Константинăв.

Ăмăртăва хутшăнчĕç

Ростов хулинчи 45, 46, 56-мĕш номĕрлĕ шкулсенчи пионерсен пĕтĕм Совет Сойузĕнчи пионерсем патне йавă çырăвне шкулсенче айлăн сÿтсе-йаваççĕ. Çапла Илйинкăри (Тутаркас районĕ) туллимар вăтам шкулти пионерсемпе комсомолĕцсем вăл чĕнĕве сÿтсе-йавса, лайăх вĕренессишĕн, айланулă дисциплинăшăн пурте социалисăмлă ăмăртăва хутшăнчĕç. Водоватăвпа Андрейăвă пионерсем хăйсен обйазатĕлствинче çапла çырнă: „Отличнă вĕренетпĕр. Вĕренÿ çулĕнче илемлĕ литературă кĕнекисене вăтăртан кайа мар вуласа тухатпăр. Оборонă значокĕн нормисене паратпăр. Иулса пыракансене пулăшатпăр. Вĕренÿ çулĕн вĕçĕнче VII-мĕш класа мухтав грамăти илсе куçасшăн тăрăшса вĕренетпĕр".

Шкул Мари республикĕнчи Кузнецовăри туллимар вăтам шкулпа ăмăртăва тухрĕ.

Г. Шумилăв.

Колхозниксем çĕнĕ пÿртсем лартаççĕ

СĔНТĔРВĂРРИ. Аслă Астакасси йалĕнчи колхозниксен пурнăçĕ çулран çулах лайăхланса пырать. Кăçал 13 колхозник çĕнĕ пÿрт лартрĕç. Çавăн пекех колхоз правлени валљи те çĕнĕ çурт турĕç.

В. Степанăв.

Комсомолĕцсен шљупкă похочĕ

Шупашкар пристăвĕ çумĕнчи комсомол комитечĕ пуçарнипе Илйинкăпа Шупашкар хушшинче шљупкă похочĕ туса ирттернĕ. Похода 6 комсомолĕц хутшăннă. Вĕсем пурĕ 11 пострти бакĕншчиксем патĕнче пулнă. Икĕ кун хушшинче бакĕншчиксене ССРС Верховнăй Совечĕн Иккĕмĕш Çеççийĕ йышăннă саккунсене, Профсойузсен Пĕтĕм Сойузри Тĕп Совечĕн VII-мĕш пленумĕ çинчен, Ленинла-Сталинла комсомол 20 çул тултарнă уйава хатĕрленесси çинчен ăнлантарса панă. Кунсăр пуçне ССРС Халăх Комиссарийачĕн Совечĕ шыв-çул транспăрчĕ пирки йышăн[illegible] 5 решени çинчен те ăнлантарнă.

М. Карпăв.

Утар пысăк тупăш парать

Йĕпреç районĕнчи „Çиçĕм" колхоз утарĕнче 1929 çулта 18 вĕлле çеç пулнă, 1936 çулта 152 вĕллене çитерсе, 642 килограм таса пыл илнĕ. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 50-шар грам валеççе панă. Тата сутса чылай тупăш илнĕ.

1937 çулта 155 вĕллене çитнĕ. Çав çулах Трак районĕнчи колхозсене 46 вĕлле сутнă. Тата колхозниксене 2 вĕлле хурт панă. Ку çул пылсăр çул пулнă пулин те, кашни вĕллерен 2-шер пăта йахăн пыл илнĕ. Ĕçкунĕ пуçне 45 шер грам пыл валеçнĕ.

— Утарти вĕллесен формине улăштарасси пирки те чылай ĕçлеме тиврĕ,—тет колхозри хурт-хăмăр маçтăрĕ Маркийанăв. —Утар пуçланнă çулхинех 10—15 формăлă вĕлле пулнă. Вĕсен шутĕнче тухăççăр тункăта вĕллесем те пулнă. 1937 çулта „Татан" тата „Дернов" формăлă стандартлă вĕллесем çине куçса çитнĕ. Пыл тухăçлăхĕ татах та ÿснĕ.

Кăçал кашни вĕллерен кунне 4-шар килограм пыл илни те пулчĕ. Пыл тухăçлăхĕ пĕлтĕрхинчен нумайрах пулать.

Утарта карăс çапмали машинă пур. Ку машинă утара пысăк тупăш парать. Кăçал ийуљ уйăхĕ тĕлне карăс сутса 2052 тенкĕ таса тупăш курнă.

Маркийанăв хуртсен пурнăçĕпе питĕ те интересленет. Вăл, хуртсем мĕнле ĕçленине вĕренесшĕн. Çав майпа вăл кантăк вĕлле тунă. Ку вĕллене пÿртех лартнă. Хуртсем кантăкран тухса çÿреççĕ. Хуртсем мĕнле ĕçлени, вĕсен пурнăçĕ йăлтах курăнать. Ку вĕллене 1937 çулта районри йалхуçалăх выставкине илсе кайнă.

Маркийанăв утарти ĕçе çăмăллатассипе тăрăшса ĕçлет. Вăл хăйех столљар, платник. Вăл хăй шутласа вĕллене вырăнта ларнă çĕртех виçмели тараса, карăс рамкисене пăралук карма шăтăк шăтармалли хатĕр тунă. Çак хатĕр ĕçе темиçе хут çăмăллатать.

Утарта 200 вĕлле вырнаçмалăх омшанник пур. Ултă кĕтеслĕ утар сурчĕ тата пĕр пысăк склад пур.

Утарăн вырăн пĕчĕкрех. Çавăнпа та малашне колхоз утара 2 çĕре тăвас тесе шутлать. 2 утар пулсан пыл тухăçлăхĕ татах та пысăк пулмала.

Колхоз кашни çулах пыл хурчĕсем валљи пыллă курăксем акса парать. Кăçал та пĕр гектар ытларах фацели тата горчицă акнă. Пыл тухăçлăхне çав та чылай ÿстерет.

Колхозра колхозниксен кашнийĕнех хуртсем пур. Хăшпĕрисен 10 вĕллене те çитет.

Колхоз утарĕ хуçалăха пысăк тупăш паракан предприйати пулса тăрать.

Г. Марушĕв.

Йапăх ĕçлени мĕнтен килет

Ишлей районĕ иккĕмĕш çул ĕнтĕ çулйĕр строитĕлстви планне тултарса пыраймасть. Иртнĕ çулхи плана—88 процент, кăçалхи çул планне—35 процент çеç тултарнă.

Район йапăх ĕçлени чăн малтанах районри руководитĕлсенчен килнĕ. Вĕсем колхозсемпе таччăн çыхăнса ĕçлесе, вĕсене конкретлă пулăшу памаççĕ. Çавăншăнах пайанхи куна чылай йалсоветсемпе колхозсем çулйĕр ĕçне тытăнман.

Кăçалхи çул Васликасси йалсовечĕн (йалсовет председателĕ Й. Филиппăв) 150 кубла метр чул, 200 кубла метр хăйăр, 150 кубла метр йăвăç хатĕрлемелле. Анчах пайанхи куна нихăшне те пĕр кубла метр хатĕрлемен. Çур километр тăршшĕ çул çине чул сармалли плана та пурнăçламан. Çулйĕр бригади (бригадирĕ Орлов) нимĕн те тумасть.

Катраç йалсовечĕ те çулталăк планне пĕтĕмпе те 0,17 процент кăна тултарнă. Чул турттарса хатĕрлес ĕçе пачах тытăнман.

Çулйĕр ĕçĕнче лайăх ĕçлекен Чаганар йалсовечĕ районра чи малта пырать. Вăл чул кăларас тата хăйăр турттарас плана ытлашшипех тултарнă.

Чаганар йалсовечĕпе ăмăртăва тухнă Ишек йалсовечĕ те çулйĕр ĕçĕнче пахха тĕслĕхсем кăтартать. Йалсовет çулталăк планне 72,4 процент тултарнă. Хăйне уйăрса панă çулйĕр участкине лайăх пăхса тăрать. Колхозсенче çулйĕр бригадисем пур.

Анчах кун пек тĕслĕхсем районра сахал. Чылай колхозсемпе йалсоветсем ку таранччен çулйĕр бригадисем те организацилемен.

Çулйĕр ĕçĕ çакăн пек пыни йалсоветсенчи çулйĕр çекцисем йапăх ĕçленинчен те килет. Йалсовет председатĕлĕсем, уйрăмăнах районти çулйĕр пайĕпе райĕçтăвком çекцисемпе ĕçлессине маннă. Чылай йалсоветсенче çак çу хушшинче çекци членĕсемпе пĕр канашлу та туса ирттермен, пленумсене те чĕнмеççĕ. Ишлей Покровски йалсовечĕ нихăш пленумра та çулйĕр строитĕлстви ыйтăвне сÿтсе-йавман. Районти çулйĕр пайĕнче ĕçлекенсем вырăнсенче сахал пулаççĕ, вĕсенчен пулăшусем, кăтартусем кĕтме çук. Йалсене, колхозсене пырсан та сведĕнисем çеç пуçтарса кайаççĕ. Паллах, каплала ĕçлесен ĕç малала кайас çук.

Районта ĕçе лайăхлатса йама пур условисем те пур. Кадрсем çителĕклĕ. Çулйĕр маçтăрĕсем, бригадирсем, уполномоченийĕсем пулса темиçе вуншар çамрăк, çĕнĕ специалиссем ĕçлеççĕ. Вĕсемпе ĕçлени, куллен пулăшса пыни çеç кирлĕ.

З. Йакăвлĕв.

С у д

Вăрă

Канашри Сортсемовоч складĕнче заведуйушчи пулса ĕçленипе усă курса, Иван Федăрăвич Суботин колхозсем тырă алама илсе пырсан, тырă вăрласа пурăннă.

„Красная пламя" колхозран сÿртлама 455 килограм тырă илсе пынă пулнă, анчах çав кунах илсе кайайман, Сортсемовоч складне хăварнă. Каçхине Суботин уйрăм лав тытсах вăл тырра вăрлама хăтланнă. Ана çавăнтах тытнă.

Çак ĕçе Канаш хулинчи халăх сучĕ пăхса тухса, Суботина çулталăк çурă хушши тĕрмере хупса усрамала турĕ.

Й. Степанăв.

Пулни-иртнисем

Вăрăсен шайки. Кармăш йалĕнчи (Куславка р.) М. Ашрафсанăвпа С. Миндубайĕв, тĕрмерен тарса тухнăскерсем, 1937 çултан пуçласа Вăрнар районĕнче выљăхсем, йапаласем тата ыт. вăрласа пурăннă. Кунсăр пуçне вĕсем чукунçул станцисенче тата пойеçсем синче пассажирсен чăмаданĕсене вăрласа çÿренĕ. Вăрнар районĕнчи милици Управленийĕ халĕ вĕсене тытса арĕсленĕ.

О Растратчик-гастролљор. Л. Н. Ломоносăв 1933 çулта, Чăвашпромкассăн канмали çуртĕнче бухгалтĕр пулса ĕçленĕ чухне, кассăран 5395 тенкĕ укçа вăрласа тарнă. Тарса пурăннă вăхăтра, хăйне шыраса тупасран хăраса, вăл хăй хушаматне темиçе хутчен те улăштарнă. Йут хушаматпа вăл татах темиçе çĕрте бухгалтĕре кĕрсе каллех укçа вăрласа тарнă. Пилĕк çул хушши тарса пурăннă жулике çак кунсенче Арзамасра тытса арĕсленĕ.

Ответлă редактăр Н. М. ÇЕМЕНАВ.

ШУПАШКАРТИ
ЛЕНИН ЙАЧĔПЕ ТĂРАКАН
ÇĔВĔ ÇĔЛЕКЕН ЕРТЕЛ
çĕнĕ вырăна Ленин урамĕнчи
„Промкоопторг" МАГАЗИНĔН
çуртне, çÿлти хутăхне куçнă, кил-картинчен кĕмеле.
Ертел çĕлеме паракансен материалĕпе тĕрлĕрен тумтирсем çĕлеме заказсем йышăнать.
ПРАВЛЕНИ.
2—2

ПĔЛТЕРÿ
„Чăваш Коммунĕ" хаçат çитес кунсенчен пуçласа ПСК(б) Парти историйĕн кĕске курсне пичетлеме тытăнать.
Вăл хаçата кноскесенче те ытларах сутаççĕ.
ÇЫРĂНСА ИЛМЕ ВАСКĂР
Çыхăну управленийĕ пичет саракан пайĕ

„Чăваш Коммунĕ" сырăнса илме хакĕсем: пĕр уйăхх 2 т. 50 пус, 3 уйăхх 7 т. 50 п., 6 уйăхх 15 т., çулталăкх 30 тенкĕ. [illegible]
Уполномоченный Чувашглавлита № [illegible]8 Гор. Чебоксары, типографи № 1 заказ № 711, Б. 4. 38×84 в. а.